им. М. Горького

ПЕТЕМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Апрель
4
ШăМАТКУН
№ 69 (8978)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

ВЦСПС ПРЕЗИДИУМĔНЧЕ (1 стр.).
Май уявĕ умĕнхи ăмăрту (1 стр.).
ССР Союзĕн электростанцисемпе электропромышленность министерствин Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завочĕн коллективĕ Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсем (1 стр.).
Тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни совет халăхĕн ĕçри хастарлăхне тата ытларах ӳстерет (2 стр.).
Н. Волков.—Пĕр район резервĕсем (2—3 стр.)
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ: **К. Дмитриев.**—Организациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленипе (3 стр.).
ССР Союзĕнче тавар хакĕсене йӳнетни çинчен урăх çĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ (4 стр.).
КРИТИКăПА БИБЛИОГРАФИ: **Н. Евстафьев, М. Юрьев.**—Паха произведени (3 стр.).
Генерал Кларк Ким Ир Сенпа Пын Де-хуэй патне янă çыру (4 стр.).
Ким Ир Сенпа Пын Де-хуэй Кларка панă ответ (4 стр.).
Ив Фаржа юлашки çула ăсатнă ятпа пулнă хурлăхлă митинг (4 стр.).
АГРОНОМ КАНАШĔ: **А. Федотов.**—Вăрлăха сывлăшпа ăшăтса лайăхлатасси (4 стр.).

Майăн пĕрремĕшне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илер

Совет Союзĕнчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци коммунизм тăвас ĕçре хăйсен хастарлăхне куллен вăйлатса пыраççĕ. Промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, транспортра — халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăрту анлăн саралчĕ.

Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли хакĕсене йӳнетесси çинчен СССР Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановлени пĕтĕм совет халăхне чун-чĕререн савăнтарчĕ. Совет çыннисем çакна лайăх пĕлеççĕ: халăх ырлăхĕшĕн пĕрмай тăрăшасси, унăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтересси пирĕн Коммунистсен партийĕпе Совет правительствишĕн закон пулса тăраççĕ. Партипе правительство халăхшăн сталинла тăрăшни çине ответлесе, совет çыннисем коммунизм строительствинче çĕнĕ ӳсĕмсем тума, халăх хуçалăх планĕсене срокчен тата ирттерсе тултарма сăмах параççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен уявĕ — Майăн 1-мĕшĕ çитесси инçе юлмарĕ. Çав уява ĕçри çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илесси рабочисен, колхозниксен тата интеллигенцин йăлине кĕнĕ. Фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе МТС-сенче, совхозсенче Тăван çĕршыва промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç ытларах туса парассишĕн, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Ку кунсенче совет çыннисем пĕрремĕш кварталти ĕç итогĕсене пăхса тухаççĕ, Май уявĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ обязательствăсем йышăнаççĕ, стахановла вахтăна тăраççĕ. Патриотизмла çак юхăмăн тĕллевĕ вăл—Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисене, И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕнче палăртнă аслă программăна чыслăн пурнăçласси. Предприятисенче производствăра усă курман резервсене палăртни, хăвatлă техникăна тата лайăхрах ĕçлеттермелли, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатмалли, чĕртаварпа материалсем перекетлемелли, социализмла ялхуçалăхĕнче тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстермелли çĕнĕрен те çĕнĕ майсем тупни — çаксем вĕсем пурте совет патриочĕсем Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçсе тăнине кăтартаççĕ.

Май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, Улатăр деповĕнчи машинистсем коммунизмăн аслă стройкисене, халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсене кирлĕ грузсене хăвăртрах илсе çитерме, нормăран ирттерсе 50 пин тонна груз турттарма, вуншар пин тенкĕлĕх çĕр кăмрăкĕ тата материалсем перекетлеме сăмах панă. Март уйăхĕнче Улатăрти фабрика çĕршер мăшăр атă-пушмак çĕлемелĕх материалсем перекетленĕ. Фабрика коллективĕ ку уйăхра тата нумайрах материалсем перекетлессишĕн кĕрешет. Канашри вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕ цехĕн коллективĕ апрель уйăхĕнчи производство программине виçĕ кун маларах тултарма, плана пур кăтартусем тăрăх та тултарма, заданирен ирттерсе 50 тонна детальсем туса кăларма социализмла обязательство йышăннă.

«Коммунизм ялавĕн» паянхи номерĕнче Шупашкарти электроаппаратура завод коллективĕ Май уявĕ ячĕпе илнĕ социализмла обязательствăсене пичетлесе кăларатпăр. Завод пĕрремĕш кварталти плана чылай ирттерсе тултарнă. Анчах кунти рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, хăйсен творчествăллă пултарулăхне вăйлатса пыма тăрăшаççĕ. Республикăри ĕçсыннисем завод коллективĕн патриотла пуçарăвне тулли кăмăлпа кĕтсе илесси пирки иккĕленмелли çук.

Парти, комсомол, профсоюз, совет тата хуçалăх организацийĕсен ĕçсыннисен çĕнĕ пуçарăвне анлă сарма, социализмла ăмăртăва кашни рабочие, колхозника, служащие хутшăнтарма тăрăшас пулать. Государство планĕсене ăнăçлă тултарса пырасси производствăна, ĕçе тĕрĕс йĕркеленинчен, малта пыракансен опычĕпе меслетне анлă сарнинчен, наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе, хăватлă техникăпа тулли усă курнинчен килет. Коммунистсен партийĕ хуçалăх руководителĕсене рабочисем валли ăнăçлă ĕçлеме, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма, продукци пахалăхне лайăхлатма паха майсем туса пама хушать. Производство командирĕсен партин çак кăтартăвĕсене куллен пурнăçа кĕртсе пымалла, государство заданийĕсене вăхăтра пурнăçласа пырассишĕн хăйсен ответлăхне хăпартмалла. Пирĕн предприятисем, стройкăсем, МТС-сем çĕнĕ те хăватлă техникăпа хĕçпăшалланнă, кадрсен ăсталăхĕ тата опычĕ те пĕрмай ӳсет. Çак условисемпе лайăх усă курас пулать.

Кашни предприятин, МТС-ăн, колхозăн усă курман резервсем нумай. И. В. Сталин юлташ çапла кăтартса панă: кирек мĕнле плансем те пирĕн стройра пытанса выртакан резервсемпе пултарулăхсене шута илсе çитерме пултараймаççĕ. Çав резервсемпе пултарулăхсем ĕçре, фабрикăсемпе заводсенче, колхозсенче, совхозсенче, районсенче плана пурнăçланă чухне çеç палăраççĕ. Аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр вĕрентни тĕрĕссине эпир кулленхи пурнăçпа ĕçрен лайăх куратпăр. Стахановецсем, рационализаторсемпе изобретательсем хуçалăх планĕсенчи, технологи процесĕнчи çитменлĕхсене палăртаççĕ, предприятисен хăватне ӳстермелли, нормăсене çĕнетсе пысăклатмалли майсене тупаççĕ. Ĕçсыннисен творчествăллă пуçарулăхне аталантарни резервсене лайăхрах усă курма, производствăна хăвăртрах аталантарма пулăшĕ.

Предприятисенчи, МТС-семпе колхозсенчи парторганизацисен самокритикăпа аялтан килекен критикăна вăйлатмалла, уяв ячĕпе йышăннă обязательствăсене пурнăçлама ĕçсыннисене мобилизацилемелле. Уйрăм коллективсем тата ĕçсыннисем ăмăртса ĕçленин итогĕсене куллен шута илни, юлса пыракансене малта пыракансене хăваласа çитме пулăшни, рабочисемпе колхозниксем хушшинче партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçе çӳлĕ пусăма хăпартни—социализмла ăмăртăва тата ытларах сарма май парĕç.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта республикăри чылай предприятисем, стройкăсем государство планне тултараймарĕç, Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăма кĕчĕç. Уйрăм МТС-семпе колхозсем çуракине япăх хатĕрленеççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли, унăн тухăçлăхне ӳстермелли задание пурнăçлассишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес, халăхран укçа-тенкĕ пухас, тавар çаврăнăш планне тултарас тĕлĕшпе те республикăра пысăк çитменлĕхсем пур. Çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтересси — партипе Советсен вырăнти организацийĕсен тивĕçĕ.

Социализмла ăмăртăва анлăн сарса, Майăн 1-мĕшне коммунизм тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер!

ВЦСПС Президиумĕнче

Партипе правительство тăрăшни çине ответлесе, социализмла ăмăртăва анлăрах сармалла

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ «Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен йӳнетесси çинчен» постановлени йышăннă май ВЦСПС Президиумĕ решени йышăннă. ВЦСПС Президиумĕ хăйĕн решенийĕнче профсоюзсен мĕнпур организацийĕсене рабочисемпе служащисен анлă массисене партипе правительство постановленийĕ çинчен ăнлантарса пама тата партипе правительство тăрăшни çине ответлесе, кашни предприяти, цех, бригада тăрăх производство планĕсене тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, кашни рабочи ĕç нормине тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн тата продукцин хăйне ларакан хакне малалла йӳнетессишĕн, ĕç тухăçлăхне малалла ӳстерессишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарса яма чĕнет.

Профсоюзсен центральнăй, область, фабрикăпа завод тата вырăнти комитечĕсене тата профсоюзсен совечĕсене сутуилӳ предприятийĕсемпе обществăллă апатлану предприятийĕсен ĕçне малалла лайăхлатас, çирĕплетнĕ хаксемпе совет суту-илĕвĕнчи правилăсене çирĕп пăхăнса тăмалла тăвас, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре культурăна ӳстерес енĕçе профсоюз активĕпе суту-илӳ работникĕсен тимлĕхне вăйлатма хушнă.

ВЦСПС Президиумĕ çапла шанса тăнине палăртать: рабочисемпе служащисем тата пирĕн социализмла Тăван çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисем, Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ таварсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен йӳнетесси çинчен йышăннă постановлени çине ответлесе, пĕтĕм халăх хушшинчи социализмла ăмăртăва малалла вăйлатĕç, ĕç тухăçлăхне ӳстерĕç, коммунизм тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕç. (ТАСС).

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

ССР Союзĕн электростанцисемпе электропромышленность министерствин Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завочĕн коллективĕ Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса илнĕ

ОБЯЗАТЕЛЬСТВăСЕМ

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ халăха кирлĕ таварсен ваккăн сутмалли хакĕсене çĕнĕрен йӳнетесси çинчен йышăннă постановление нумай миллионлă пирĕн пĕтĕм халăх пысăк хаваслăхпа тата савăнăçпа кĕтсе илчĕ.

Партипе правительство ĕçсыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн атте пек тăрăшнишĕн савăнса, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине вĕçĕ-хĕррисĕр парăннă совет халăхĕ хăйĕн Тăван çĕршывĕн ырлăхĕшĕн ытларах вăй хурса ĕçлет, коммунизм тăвассишĕн кĕрешсе, мирлĕ ĕçри çитĕнӳсене ӳстерсе пырать.

Пирĕн завод коллективĕ, социализмла обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе, март уйăхĕнче таварлă продукци туса кăлармалли плана 124,1 процент, пĕрремĕш кварталти плана 112,5 процент тултарчĕ. Плана номенклатура енĕпе те, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес тата ĕç тухăçлăхне ӳстерес енĕпе те тултарнă.

Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă уявне—Майăн 1-мĕшне чыслăн кĕтсе илес тесе, завод коллективĕ çакăн пек обязательствăсем йышăнать:

1. Апрель уйăхĕнчи плана 105 процент тата номенклатура енĕпе те тултармалла, 1953 çулхи тăватă уйăх программине апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

2. Апрель уйăхĕнче ĕç тухăçлăхĕ енĕпе панă плана 102 процент тултармалла.

3. Продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн, материалсене перекетлессишĕн пур участоксенче те социализмла ăмăртăва анлăн сармалла, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес тĕлĕшпе панă задание пĕр процент чухлĕ ирттерсе тултармалла.

4. Электроэнерги расходлассине нормăпа палăртнинчен 10 процент чухлĕ чакармалла.

5. Чи лайăх продукци туса кăларакан бригада ятне илессишĕн ăмăртакан бригадăсен шутне ӳстермелле, вĕсене 184-ран икçĕре çитермелле.

6. Малта пыракансен ĕç меслечĕсене сарас майпа механически тата крепежнăй цехсенче стахановла шкулсем организацилемелле.

7. Транспортпа йывăр машиностроени министерствипе металлурги промышленноçĕн министерстви коммунизмăн аслă стройкисем валли паракан заказсене срокчен пурнăçламалла, Куйбышевпа Мускав хушшинчи электропередача линийĕ валли тунă опытлă, питĕ кирлĕ икĕ электроаппарата тĕрĕслесе çитермелле.

8. Механически, штамповочнăй, крепежнăй цехсенчи тĕреслӳ пункчĕсене кăнтăрлахи пек çутатакан лампăсемпе çутатмалла.

Завод коллективĕ хушнипе:
Завод директорĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. БУЙВОЛОВ.
Партком секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ В. ТРУШИН.
Профсоюз завком председателĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ПАВЛОВ.
ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Б. БОРОДИН.

Уйăхри плана—апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне

Шупашкар станцинче ĕçлекен рабочисемпе служащисем 1953 çулхи 1-мĕш кварталти социализмла ăмăрту итогĕсене пăхса тухрĕç. Станци грузсем тиесе ăсатмалли кварталти задание ирттерсе пурнăçланă.

Май уявĕ ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, Е. Степанова стрелочница хăйĕн участокне пысăк пахалăхпа пăхса усрама, поездсене хăвăрт йышăнса ăсатма сăмах пачĕ, А. Долгова стрелочницăна ăмăртăва чĕнчĕ. Станци коллективĕ уйăхри плана апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма социализмла обязательство илчĕ.

Г. МАЛЬЦЕВ.

Кварталти плана ирттерсе тултарнă

Чăваш республикинчи полиграфи промышленноçĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталти плана продукци туса кăларас енĕпе 105,3 процент тултарчĕ. Иртнĕ çулхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан 21 процент ытларах продукци туса кăларнă.

Хăшпĕр типографисем плана чылай ирттерсе пурнăçларĕç. Вăрнарти типографи плана—173 процент, Сĕнтĕрти типографи—159,2, Вăрмарти типографи—153,8, Йĕпреçри типографи—139,3, Ишлейри типографи—139 процент тултарчĕç. Республикăна пăхăнса тăракан типографисенчен Çĕрпӳри, Çĕмĕрлери тата Шупашкарти типографисем лайăх ĕçленине палăртас пулать.

Шупашкарти типографи шкулсем валли учебниксем пичетлесе кăлармалли пĕрремĕш кварталти плана 160 процент тултарчĕ. Учебниксемпе ытти кĕнекесем пичетлесе кăларас енĕпе уйрăмах Мартыновăпа Ерофеева наборщицăсем, Корнеевăпа Маслова печатницăсем, Мироновăпа Песчинская переплетчицăсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем ĕç нормине куллен 150 процент таран тултарса пыраççĕ.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ таварсен хакĕсене йӳнетесси çинчен йышăннă постановленипе хавхаланса, полиграфи предприятийĕсенче ĕçлекенсем социализмла ăмăртăва çĕнĕрен вăйлатса ячĕç. Полиграфистсем плана срокчен, лайăх пахалăхпа тултарас, чĕртавара, электроэнергине перекетлес тесе, ĕлĕкхинчен пысăкрах обязательствăсем илеççĕ. Шупашкарти пĕрремĕш номерлĕ типографинче ĕçлекенсен коллективĕ кăçалхи тăватă уйăхри плана апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах пачĕ.

П. КАПИТОНОВ.

Ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ

Çĕмĕрлери Ширшов ячĕпе тăракан промартель членĕсем СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă решенисене тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçме тупа турĕç. Юлашки вăхăтра артельте социализмла ăмăрту çĕнĕ хăватпа вăйланса кайрĕ. Чылай рабочисем ĕç нормине 150—180 процент таран тултарса пыраççĕ.

17 çул хушши ĕçлет артельте М. Бурашникова мастер. Вăл ертсе пыракан цехра ĕç нормине тултарман çын çук. Социализмла ăмăрту анлăн саралнине пула, артель продукци туса кăлармалли кварталти плана срокчен тата ирттерсе тултарчĕ.

Артель членĕсем хăйсен пултарулăхĕпе резервĕсене тишкерсе тухрĕç, Май уявĕ ячĕпе çĕнĕ, малтанхинчен пысăкрах обязательствăсем йышăнчĕç. «Красный Октябрь» промартель членĕсене социализмла ăмăртăва чĕнчĕç.

«Красный Октябрь» промартель членĕсем çак чĕнĕве ырларĕç, Май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăма пулчĕç тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç. Артельте уйăхри плана апрелĕн 22-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн вăйлă кĕрешӳ пырать.

Баранов, Бибикин, Коряшкин, Ефремов, Ратников юлташсем ĕç нормине тăтăшах 130—150 процент тултараççĕ. Кондратьева тата Ильина юлташсем вара тата паharах тĕслĕхсем кăтартаççĕ, ĕç нормине 160—170 процент тултарса пыраççĕ.

Районти пур артельсемпе промкомбинатсенче те Май уявĕ умĕнхи ăмăрту сарăлса пырать. Вĕсен коллективĕсем апатçимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни çине стахановла ĕçпе ответлеме пулаççĕ.

П. АНИСИМОВ.

ХИСЕП ХăМИ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсем тăратнă тăрăх, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

ЧКАЛОВСКИ РАЙОНĔ ТăРăХ

28. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Н. Чувайкин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **П. Плечов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 102 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 109 процент, турттарса кăлармалли плана 101 процент тултарнă.

ПЕРВОМАЙСКИ РАЙОНĔ ТăРăХ

29. **Маленков ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. Тимофеев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Аристов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,3 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 112,9 процент, турттарса кăлармалли плана 134,5 процент тултарнă.

30. **«Красная Поляна» колхоз** (председателĕ **П. Степанов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Кошкин** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли тата каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 100 процент, турттарса кăлармалли плана 121,5 процент тултарнă.

31. **«Сталинград» колхоз** (председателĕ **П. Павлов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **М. Тетина** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,4 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 100,3 процент, турттарса кăлармалли плана 154,8 процент тултарнă.

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТăРăХ

32. **Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Г. Виноградов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Моляков** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 108 процент, турттарса кăлармалли плана 104,4 процент тултарнă.

ПăРАЧКАВ РАЙОНĔ ТăРăХ

33. **«Ударник» колхоз** (председателĕ **И. Макалов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **И. Козлов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăсен бригадирĕсем **С. Баланов, Ф. Сафронов** юлташсем). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 117 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 104,5 процент, турттарса кăлармалли плана 100,5 процент тултарнă.

КАНАШ РАЙОНĔ ТăРăХ

34. **«Коммунар» колхоз** (председателĕ **Н. Васильев** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **М. Афанасьев** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **С. Ефимов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 102,7 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 100 процент, турттарса кăлармалли плана 100,8 процент тултарнă.

Ăмăртура мала тухнă механизаторсем

СССР Вăрман промышленность министерствипе вăрманпа сулă юхтаракан рабочисен профсоюзĕн Центральнăй комитечĕ механизаторсен 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталти социализмла ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă.

Министерствăпа Центральнăй комитет пирĕн республикăри вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен механизаторсенчен çак юлташсем Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура мала тухнине палăртнă:

«Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан Алтышево вăрманпромхозĕнчи тракторист-трелевщик **Николай Ильич Вельдяев** юлташ. Вăл 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталта КТ-12 тракторпа 500 метртан 3.533 кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухнă, çапла вара кашни сменăра вăтам шутпа 57 кубометр илсе тухнă, ĕç нормине 160 процент тултарнă.

Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнчи каснă йывăçа лавпа çул хĕррине илсе тухакан лавçă **Михаил Иванович Обливанцев** юлташ. Вăл ахаль çул тăрăх 1.408 кубометр йывăç турттарса кăларнă, сменăри задание вăтам шутпа 312 процент тултарнă. Вельдяевпа Обливанцев юлташсене чи лайăх трелевщик-мастер ятне панă.

РСФСР Вăрман промышленность министерстви хăйне пăхăнса тăракан предприятисенче ĕçлекен механизаторсен 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталти социализмла ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă. Министерство пирĕн республикăри вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен механизаторсенчен çак юлташсем РСФСР-та мала тухнине палăртнă:

«Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан Кире вăрманпромхозĕнчи тракторист **Иван Егорович Борисов** юлташ. Вăл 1952 çулхи тăваттăмĕш кварталта КТ-12 тракторпа 350 метртан 3.604 кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухнă, кашни сменăра вăтам шутпа 63,2 кубометр илсе тухнă, ĕç нормине вăтам шутпа 138 процент тултарнă.

Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнчи пăравус машинисчĕ **Петр Михайлович Чугунов** юлташ. Вăл пурĕ 3.895 кубометр йывăç турттарса кăларнă, ĕç нормине вăтам шутпа 194 процент тултарнă.

Çак вăрманпромхозри электропăчкăпа ĕçлекен моторист **Виктор Павлович Шумилин** юлташ. Вăл 3.348 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ, ĕç нормине вăтам шутпа 115 процент тултарнă.

Асăннă юлташсене чи лайăх механизатор-мастер ятне панă.

1952 çулхи тăваттăмĕш кварталта çав механизаторсем лайăх ĕçленине палăртнă: Кире вăрманпромхозĕнчи М. Н. Сысуйкин тракторист, Улатăр вăрманпромхозĕнчи И. И. Ибрагимов тракторист, Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнчи Н. Г. Власов машинист.

СССР, РСФСР Вăрман промышленность министерствисем, рабочисен профсоюзĕн Центральнăй комитечĕ Пĕтĕм Союзри тата РСФСР-ти социализмла ăмăртура мала тухнине палăртни вăрманпромхозсенчи механизаторсене çĕнĕ вăйпа ĕçлеме, Май уявне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хавхалантарать. Уяв ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, вуншар механизаторсем ĕç нормине куллен ирттерсе тултараççĕ, Тăван çĕршыва йывăç ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр кĕрешеççĕ.

П. ИЛЬИН.

Тăван çĕршыв хăватне ӳстерессишĕн

ЕТĔРНЕ. Совет правительствипе партин Центральнăй Комитечĕ тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетесси çинчен кăларнă постановление радиопа пĕлтерсенех предприятисемпе колхозсенче, учрежденисенче пухусемпе митингсем пулса иртрĕç.

Вăрман пунктĕнче пулса иртнĕ митингра П. Медведев стахановец-лесоруб çапла каларĕ:

— Таварсен хакне çулсеренех йӳнетни ĕçсыннисене вĕçĕ-хĕррисĕр савăнтарать. Партипе правительство пирĕншĕн куллен тăрăшни пире ĕçре хавхалантарать. Эпĕ коммунизм строительствин задачисене ăнăçлăн пурнăçлас тесе, кулленхи нормăна 150 процент тултарса ĕçлеме пулатăп.

П. Шарапов, П. Вашуткин, А. Ильин рабочисем те хăйсен сăмахĕсенче партипе правительствăна тав турĕç, кулленхи заданисене 150-шар процентран кая мар тултарса ĕçлеме обязательствăсем илчĕç.

Савăнăçлă пухусемпе митингсем колхозсенче те пулса иртрĕç. «Большевик» колхозри колхозниксен пухăвĕнче фермăсен заведующийĕ И. Васильев юлташ çапла каларĕ:

— Партипе правительство ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн яланах тăрăшаççĕ. Тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетмелле туни — ĕçсыннисен пурнăçне татах та лайăхлатассишĕн тăрăшни пулать. Пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен пурнăçĕ куллен-кун лайăхланса пынă вăхăтра капитализмла çĕршывсенчи ĕçсыннисен пурнăçĕ начарланса пырать. Империалистсем çĕнĕ вăрçа хатĕрленсе, урса кайсах хĕçпăшалланса, ĕçсыннисен пурнăçне начарлатаççĕ, вĕсен юлашки çăкăр татăкĕсене туртса илеççĕ. Эпир, пирĕн партипе правительство колхоз ĕçченĕсен пурнăçне лайăхлатма тăрăшнине ответлесе, кăçал кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.400 литр сĕт, кашни сурăхран 3,5 килограмм çăм, кашни сысна аминчен 13-шер çура илме сăмах паратпăр.

Колхозниксем çуракине пур енчен те кăтартуллăн хатĕрленсе ирттерме обязательство илчĕç.

Н. ЦВЕТКОВ.

Тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни совет халăхĕн ĕçри хастарлăхне тата ытларах ӳстерет

Ĕççынниçен ырлăхĕшĕн

МУРКАШ. (Хамăр корр.). Клубра халăх тулликх. Унта МТС механизаторĕсем, Сталин ячĕпе тăракан артель членĕсем, район центрĕнчи рабочисемпе служащисем пухăннă. Вĕсем партипе правительство апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене çĕнĕрен йӳнетмелле туни çинчен КПСС райкомĕн секретарĕ Г. Ульянов юлташ каласа панине тимлĕн итлеççĕ.

Трибуна умне малта пыракан трактор бригадин бригадирĕ Г. Егоров юлташ тухать.

— Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççынниçен ырлăхĕшĕн куллен тăрăшаççĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче улттăмĕш хут ĕнтĕ тавар хакĕсене чакарчĕç. Халăхшăн çавăн пек тăрăшнине пирĕн çĕршывра кăна курма пулать. Çакăншăн эпир партипе правительствăна чун-чĕререн тав тăватпăр, Тăван çĕршывăн ырлăхĕпе хăвачĕшĕн тата ытларах вăй хурса ĕçлеме, тухăçлă тырпул ӳстерессишĕн тăрăшма, çуракине лайăх хатĕрленсе ирттерме пулатпăр, — тет Егоров юлташ. Вăл хăйĕн бригади тракторсене юсаса пĕтерни, çуракине халĕх тухма хатĕрри, ытти бригадăсем те акана тимлĕн хатĕрленни çинчен пĕлтерет.

Унтан Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Е. Андреев юлташ сăмах илет.

— Пирĕн артель членĕсем, — тет вăл, — партипе правительство тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетме йышăннине тулли хаваслăхпа, ĕçри пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Тавар хакĕсене нумай йӳнетсе пыни пирĕн çĕршыв вăйланнине, коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççынниçен ырлăхĕшĕн куллен тăрăшнине яр-уççăн кăтартса парать.

Андреев юлташ Сталин ячĕпе тăракан артель членĕсем хăйсен кăçалхи обязательствисене чыслăн пурнăçласа пыни çинчен каласа парать. Çуракине лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Сортлă тата таса вăрлăх хатĕрленĕ, уя 4 пин тонна ытла тислĕк кăларнă. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли кăçалхи плана пур выльăхсемпе те ирттерсе тултарнă. Выльăх-чĕрлĕхрен тупăш илесси нумайлансах пырать. Пĕрремĕш кварталта кăна кашни ĕнерен 450-шар литр сĕт суса, кашни сысна аминчен 9-шар çура, 100 сурăхран 112-шер путек илнĕ. Квартал планне тултарнă хыççăн, государствăна 18 пин литр сĕт тата аш-какай сутнă.

— Эпир,—тет малалла вăл, — партипе правительство пирĕншĕн тăрăшнине ответлесе, пĕтĕм вăй-хăвата парса ĕçлеме, Тăван çĕршыв валли тырпулпа выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах туса пама пулатпăр.

Тухса калакансем кашниех халăх ырлăхĕшĕн, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн куллен тăрăшнăшăн Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине пĕтĕм чунчĕререн тав турĕç. Партин ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕ тавра тата тачă пĕтĕçсе, Тăван çĕршывăн хăвачĕпе пуянлăхĕшĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме сăмах пачĕç.

Ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр

СОВЕТСКИ. Маленков ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем СССР Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ваккăн сутмалли таварсен хакĕсене йӳнетесси çинчен кăларнă постановление питĕ пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Çак постановление радио тăрăх пама пуçласан, клуба халăх нумай пухăнчĕ. Пурте тимлĕ итлеççĕ. Нумайăшĕ диктор сăмахĕсене çырса пыраççĕ.

Постановление итленĕ хыççăн, ватă колхозник-стахановец З. Александров юлташ çапла каларĕ:

— Эпĕ утмăл тăватă çула çитрĕм, манăн тепĕр çавăн чухлĕ пурăнас килет. Халăх пурнăçĕ çултан-çул лайăхланса пырать. Халăхăн телейлĕ те пуян пурнăçĕшĕн ывăнма пĕлми ĕçлес килет.

Эпир Совет государствипе унăн халăхĕсем тунă çитĕнӳсемпе тивĕçлипе мухтанма пултаратпăр. Эпир, совет çыннисем, Ленинпа Сталин партийĕ ертсе пынипе, пирĕн çĕршывра коммунизм çĕнтерессишĕн, пĕтĕм тĕнчипе мирлĕ пурнăç тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр.

К. ПАЛИТРОВ,
Маленков ячĕпе тăракан колхоз членĕ.

ЧĔРЕРЕН ТАВ ТĂВАТПĂР

Манăн пурĕ 10 ача. Вĕсенчен виççĕшĕ ялти çичĕ çул вĕренмелли шкулта, ыттисем институтра, техникумра, вăтам шкулта тата государствăн промышленность шкулĕнче вĕренеççĕ. Эпир, ашшĕ-амăшĕсем, вĕсемшĕн пĕтĕм тулли кăмăлпа хĕпĕртетпĕр, вĕсем ăс-тăн пухса хамăрăн Тăван çĕршывшăн усăллă çынсем пулса ӳсессе шанатпăр.

Коммунистсен партийĕпе совет влаçĕ, аслă Ленинпа Сталин пире телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса пачĕç, çамрăк ăру умне аслă та сарлака çул уçса пачĕç. Çавăнпа та эпĕ, йышлă ачасен амăшĕ, хамăрăн Совет правительствипе Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне чун-чĕререн тав тăватăп.

Иртнĕ кунсенче пирĕн çĕршывшăн калама çук пысăк хурлăхлă кунсем пулчĕç. Аслă учитель, колхоз хресченĕсен чи çывăх тусĕ И. В. Сталин пирĕнтен ĕмĕрлĕхе уйрăлса кайрĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ И. В. Сталин тупăкĕ умĕнче Совет правительстви малашне те ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас политикăна пурнăçласа пырасси çинчен каларĕ. Çакă вăл Коммунистсен партийĕн, Совет правительствин яланхи политики пулнă. Пирĕн çĕршывра урăхла пулма та пултараймасть. Партипе правительство пĕтĕм ĕçе рабочисемпе служащисен, колхозлă ял хресченĕсен пурнăçне лайăхлатас тĕллевпе туса пынă, малашне те çавăн пек туса пырĕç. Çакна эпир пирĕн правительство промышленность таварĕсене вăрçă хыççăнхи çулсенче ултă хутчен чакарнинчен те аван куратпăр.

Тавар хакĕсене чакарни колхозлă ял хресченĕсене, нумай ачаллă çемьесене чĕререн савăнтарать. Пире тулăх пурăнма, хамăр ачасене лайăх пăхса ӳстерме май парать. Пирĕншĕн, колхозлă ял ĕçченĕсемшĕн куллен тăрăшнăшăн, эпир партипе правительствăна чĕререн тав тăватпăр.

А. ИГНАТЬЕВА,
Первомайски районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри работницăсем пурăнакан общежитин хĕрлĕ кĕтесĕнче. Агитатор Р. Соловьева работницăсене КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ тавар хакĕсене йӳнетесси çинчен йышăннă постановлени çинчен ăнлантарса парать.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Хулари магазинсенче

Апрелĕн 1-мĕшĕ.

Шупашкарти магазинсене,ларексене, столовăйсене яланхи пекех вăхăтра уçрĕç. Витринăсенчи таварсен çĕнĕ, йӳнĕрех хакĕсене кăтартса çырнă.

Карл Маркс урамĕнчи 13-мĕш номерлĕ магазин. 11 сехет тĕлне кунта халăх нумай пуçтаранннă. Пурте партипе правительство тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни çинчен хавасланса калаççĕ.

— Кĕсъене чиксе çӳремелли сехет илесшĕн-ха. Унăн хакне 10 процент йӳнетнĕ, 26 тенкĕ перекетленет,— тет пĕри.

— Питех те савăнмалла, пир-авăр хакĕсене чылай йӳнетнĕ мĕн,— тет тепри.

Магазинта çирĕп йĕрке. Кашниех хăйне кирлĕ тавара суйласа илет.

— Мана пилĕк метр сатин виçсе парха, — тет Е. Александрова, кил хуçи хĕрарăмĕ. Вăл кассăна 60 тенкĕ те 75 пус тӳлет.

— Тавар хакĕсене йӳнетнипе пула эпĕ пилĕк метр сатинра кăна 3 тенкĕ ытла перекетлерĕм,— тет вăл.

Йӳнетнĕ хакпа суту-илӳ тунă малтанхи кун магазинта халăх нумай пулчĕ. Çак кун магазин ытти кунхисенчен чылай нумайрах тавар сутрĕ.

Тавар хакĕсене йӳнетиччен малтанхи кунсенче магазин вăтамран 30—40 пин тенкĕлĕх тавар сутнă. Апрелĕн 1-мĕшĕнче вара, йӳнĕ хакпа пĕр кунта 86.712 тенкĕлĕх тĕрлĕрен тавар сутнă. Вăл шутра пĕр пианино. Пианино малтан 5.865 тенкĕ тăнă пулсан, çĕнĕ хакпа 600 тенкĕ йӳнерех сутнă. Пĕр кун хушшинче ĕççыннисем «Балтика» маркăллă улта радиоприемник, 10 шкаф, вуншар пин тенкĕлĕх атă-пушмак туяннă. Культура таварĕсем сутакан уйрăм пĕр кунта 16 пин тенкĕлĕх тавар сутнă. Ытти кунсенче çав уйрăм вăтамран 3—4 пин тенкĕлĕх кăна тавар сутнă.

Пусма таварсем сутакан уйрăм ытти кунсенче 8—9 пин тенкĕлĕх тавар сутнă пулсан, çĕнĕ хакпа вара пĕр кунта 23 пин тенкĕлĕх тавар сутнă. Ĕççыннисем пурçăн, креп-дешин тата çавăн пек хаклă йышши пусма таварсем ытларах туяннă.

Апат-çимĕç таварĕсем сутмалли магазинсенче апрелĕн 1-мĕшĕнче халăх уйрăмах нумай пулчĕ. Сахăр, çу, колбасса, макарон тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем илекенсем питех те нумай.

Карл Маркс урамĕнчи 1-мĕш номерлĕ магазин пĕр кун хушшинче 61.800 тенкĕлĕх апат-çимĕç таварĕсем сутнă.

— Пĕр килограмм колбасса илтĕм, ĕнерхи хакпа танлаштарсан 3 тенкĕ перекетленсе юлчĕ. Ытти таварсен хакĕ йӳнелнине шутласан çулталăкра мĕн чухлĕ укçа перекетленет. Çак укçа вăл пĕтĕмпех пирĕн пурнăçа лайăхлатма каять,—тет тир-сăран комбинатĕнче ĕçлекен Г. Никитин юлташ.

Культура таварĕсем сутакан магазинсене кĕретпĕр. Ĕççыннисен тулăх пурнăçĕ сĕтел тулли апат-çимĕçре кăна мар, вĕсем культурăллă канма, вăхăта усăллă ирттерме пĕлнинчен уççăн курăнать. Патефон, музыка инструменчĕсем, пысăк мар библиотекăсем туяннă çемьесем те халĕ сахал мар ĕнтĕ.

«Динамо», «Роскульттторг» магазинĕнче мотоцикл, велосипед, культура таварĕсем илекенсем питех те нумай.

— Мотоциклет илме пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕнченпе хатĕрленетĕп. Укçа кирлĕ чухлех перекетлесе пухрăм. Халĕ хамăн ĕмĕте пурнăçларăм,— тет Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра мастер пулса ĕçлекен И. Яшурин «ИЖ-49» маркăллă мотоциклшăн 3.870 тенкĕ укçа тӳлесе.

Апат-çимĕç, промышленность таварĕсем сутмалли кирек хăш магазина кĕрсен те ĕççыннисем тавар хакĕсене çĕнĕрен йӳнетнишĕн чĕререн савăнса калаçнине илтетĕн.

Магазинсенче темĕн тĕрлĕ таварсем те пур, кама мĕн кирлĕ, çавна суйласа ил. Çакă пирĕн Тăван çĕршыв çултан-çул пуянланса, ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынине яр-уççăн кăтартса парать.

Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче столовăйра пултăмăр.

— Ĕнер те, паян та çак апатах çирĕм. Анчах хакĕ икĕ тĕрлĕ пулчĕ. Ĕнер 5 тенкĕ те 40 пус тӳлерĕм, паян 3 тенкĕ те 90 пус, 1 тенкĕ те 50 пус перекетленсе юлчĕ. Столовăйра кунне пĕрре апатлансан та уйăхра 45 тенкĕ перекетленет,— тет пир-авăр фабрикинче ĕçлекен В. Андреев рабочи.

Столовăйсем, магазинсемпе ларексем апрелĕн 1-мĕшĕнче йӳнĕ хакпа пулин те ытти чухнехинчен темиçе хут ытларах тавар сутнă. Саккăрмĕш магазин ытти кунсенче 30—35-шер пин тенкĕлĕх тавар сутнă пулсан, апрелĕн 1-мĕшĕнче 60 пин тенкĕлĕх промышленность таварĕсем сутнă, 39-мĕш магазин пĕр кунта 40 пин тенкĕлĕх апат-çимĕç сутнă. Мартăн 31-мĕшĕнче 8 пин тенкĕлĕх кăна сутнă пулнă.

Магазинсенче апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене йӳнетнĕ май колхоз пасарĕнчи таварсен хакне те чылай йӳнетме май пачĕ. Сĕт, çĕрулми, çу, аш-какай тата ытти таварсен хакĕсем малтанхинчен чылай йӳнелнĕ.

Н. МИНИН.

Ĕçри хастарлăх ӳсет

ОКТЯБРЬСКИ. (Телефонпа). Районти колхозсемпе учрежденисенче тата предприятисенче митингсем пулса иртеççĕ.

МТС-ри механизаторсен митингĕнче 55 çын пулчĕ. Трактор бригадин бригадирĕ Е. Комиссаров юлташ çапла каларĕ:

— Партипе правительство халăх пурнăçне кунтан-кун лайăхлатса пыраççĕ. Таварсен хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни пире татах та тимлĕнрех ĕçлеме хавхалантарать. Партипе правительство ĕççыннисемшĕн хытă тăрăшни çине ответлесе, эпĕ, механизаторсен ячĕпе, çуракинчи ĕçсене кĕске срокра туса пĕтерме, колхоз уйхирĕсенче пысăк тухăçлă тырпул туса илме, производство планне ирттерсе тултарма сăмах паратăп.

Тракторист Н. Комиссаров, механик В. Губанов юлташсем партипе правительствăн çĕнĕ постановленийĕ халăх шухăшкăмăлне çĕклени, ĕçри хастарлăха ӳстерни çинчен каласа пачĕç.

В. ТРОФИМОВ.

Ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн

УЛАТĂР. Пăравуссем юсакан завод коллективĕ СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли хакĕсене йӳнетесси çинчен йышăннă постановление пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕ.

Апрелĕн 1-мĕшĕнче, пĕрремĕшпе иккĕмĕш сменăсем улшăннă вăхăтра, заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен, служащисен пухăвĕ пулчĕ. Унта тухса калакансем таварсен хакĕсене çĕнĕрен йӳнетнĕшĕн партипе правительствăна тав турĕç, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн, Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртура илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлеме сăмах пачĕç.

Пухура завод начальникĕ Соколов юлташ партипе правительство таварсен хакĕсене тăтăшах йӳнетсе пыни çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн сборочнăй цехра мастер Муравцов юлташ сăмах илчĕ.

— Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни, — терĕ вăл, — пирĕн партипе правительство ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн яланах хытă тăрăшни çинчен калать. Партипе правительство халăх интересĕсемшĕн тăрăшни çине ответлесе, пирĕн хамăрăн ĕçри хастарлăха ӳстермелле, стахановла ĕçленипе çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас пулать.

— Партипе правительство таварсен хакĕсене çĕнĕрен йӳнетесси çинчен йышăннă постановление пĕтĕм совет халăхĕ савăнăçлăн кĕтсе илчĕ, — терĕ механически цехри токарь-стахановец Скворцов юлташ. — Эпир лайăх пурăнатпăр, малашне тата та лайăхрах пурăнăпăр. Пирĕн халĕ пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен уявне — Майăн 1-мĕшне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать. Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ! Сывă пултăр тăван Совет правительстви!

Пухура котельнăй цехри çамрăк котельщик-стахановец Данилин, сборочнăй цехри слесарь Толстов, сборочнăй цех начальникĕ Петин юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем пирĕн социализмла Тăван çĕршывра ĕççыннисен пурнăçĕ çултан-çул лайăхланса пыни, çав вăхăтрах капитализмла çĕршывсенче империалистсем ĕççыннисене хытăрах та хытăрах пусмăрлани, ĕççыннисĕн пурнăçĕ начарланса пыни çинчен каласа пачĕç.

Пухура тухса калакансем заводри мĕнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата тимлĕрех ĕçлеме, Тăван çĕршыва тата ытларах чечеклентерессишĕн кĕрешме чĕнчĕç.

А. СМИРНОВ.

Ырă хыпар

Илемлĕ вăхăт. Çепĕç çуркунне...
Ак эпĕ пытăм радио умне.

Янрарĕ ырă, лайăх çĕн хыпар:
Пӳнелнĕ пирĕн çĕршывра тавар.

Хаваслă, уçă. Чăн уяв пекех...
Итлетпĕр тимлĕн — пĕтĕм çемйипех.

Калатпăр пурте савăнăçлăн çакна:
«Мухтавлă парти, тавтапуç сана!»

Тăратпăр çирĕп миршĕн чĕререн,
Ӳсет халь халăх вăйĕ кунсерен.

Ĕç шавĕ тулчĕ пĕтĕм таврана:
Сыв пултăр парти! Чыс, мухтав ăна!

Василий АЛЕНДЕЙ.

Пĕр район резервĕсем

Чурачăк районĕнчи колхозниксемпе механизаторсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем хăйсен 1952 çулхи ĕçĕсен итогĕсем çинчен пысăк тимлĕхпе сӳтсе яврĕç. Кăçалхи отчетлă тата отчетпа суйлав пухăвĕсем колхоз ĕçченĕсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ малалла ӳснине, вĕсем партин XIX-мĕш съезчĕ социализмла ялхуçалăхне хăватлăн аталантарас тĕлĕшпе партиă задачăсене чун-чĕререн йышăнса илнине, çав задачăсене тӳррĕн пурнăçлассишĕн мĕнпур вăйпа кĕрешме хатĕр пулнине кăтартса пачĕç.

Пухусенче критикăпа самокритикăна анлăн сарни колхоз правленийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене тупса палăртма пулăшрĕ. Кунпа пĕрлех колхозниксемпе механизаторсем тата специалистсем колхоз стройне малалла тĕреклетес, çĕрĕç, выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç культурине хăпартас, общественнăй хуçалăха вăйлăнрах аталантарас тĕлĕшпе нумай сĕнӳсем пачĕç.

Пухусенче районти парти, совет тата ялхуçалăх органĕсене критиклесе калаканнисем те сахал мар пулнă. Вĕсем колхозсене ертсе пырас ĕçре кивĕ меслетсенчен хăтăлса çитмен-ха, кашни колхозра хуçалăхпа культура строительстви мĕнле пынине вăхăтра тата тĕплĕн пăхса тăраймаççĕ, уйрăм çитĕнӳсем пулнипе хăпланса, çав çитĕнӳсен хыçĕнче пысăк çитменлĕхсене пулнине час-часах асăрхамасăр хăвараççĕ.

1952 çулта производство планĕсене мĕнле пурнăçлани çинчен районти 40 колхоз пурте райисполкома çулталăкри отчетсем тăратрĕç. Партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем халĕ ĕнтĕ кашни колхозăн иртнĕ çулти ĕçĕсен итогĕсене тĕплĕ анализ тума, малта пыракансен опычĕсене пĕтĕçтерме, колхоз производствине организацилес тата ертсе пырас ĕçре пулнă çитменлĕхсен сăлтавĕсене тупса палăртма, малашне вĕсене пĕтермелли тĕрĕс мерăсем йышăнма пултараççĕ.

Чурачăк районĕ 1952 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлеймерĕ. Колхозсенчен пысăк пайĕ ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстермелли государство планне тултараймарĕ, обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхĕ те планпа палăртнинчен чылай сахалрах.

Чылай колхозсенче, тĕштырăпа техникăллă культурăсен тухăçне ӳстермелли плана мĕншĕн тултараймасни çинчен ыйтсан, пĕр сăлтав çине йăвантарма пăхаççĕ.

1952 çулта Чурачăк районĕнче çанталăк условийĕ тĕлĕшĕнчен ниçта пулса, уй-хирти тырпулпа ытти çимĕçсен пĕр пайне сиен туса хăварнă, çавăн пирки плана ăнăçлă тултарма май пулман. Çавăн пек калаçнипе хăшпĕр специалистсем те килĕшеççĕ. Анчах малта пыракан колхозсен çитĕнĕвĕ ун пек сăлтава сирсе ярать.

Акă, тырпулсен пĕр пайне пăр тивсе сиенленĕ «Совет» колхозра тĕштырăсен тухăçĕ гектар пуçне вăтам шутпа 12 центнера çитет. Калинин ячĕпе тăракан колхоз, çавăн пек сиен курнă пулин те, кашни гектартан 9 центнер тырă, 350 центнер выльăх кăшманĕ, 203 центнер çĕрулми пухса кĕртнĕ. «Прогресс» колхозра та тĕштырăсемпе тымарçимĕçсен тухăçĕ çав цифрăсен патне çывхарать. Кун пек тĕслĕхсем районта сахал мар.

Ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстермелли плана тултарайманнин тĕп сăлтавĕ çанталăк условийĕсем ăнăçсăр пулнинче мар, агротехника требованийĕсене тӳррĕн пурнăçламаннинче, чи малтан уй-хир ĕçĕсене вăхăтра туса пыманнинче.

1952 çулти çураки ĕçĕсем пĕтĕм районĕпе висĕ эрнене яхăн пынă. Кая юлса акнă колхозсенче ĕнтĕ суртрисен тухăçĕ, государство планĕпе танлаштарсан, çурри те пулаймасть. Çураки ĕçĕсен срокне кĕскетме колхозсенче майсем пулнă-и-ха? Ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕ А. Афанасьев юлташ шутласа панă тăрăх, ун пек майсем пулнă.

Трактор бригадисене çураки тапхăрĕнче çителĕксĕр ĕçленĕ тесе айăплама çук. Вĕсем çуркунне сухаламалли, культиваци тумалли, акмалли плансене договорта кăтартнă срокра тата чылай ирттерсе тултарнă. Анчах ку районта икĕ çул çеç каярах организациленĕ МТС çураки тапхăрĕнче колхозсен уй-хирĕсенчи мĕнпур ĕçсене механизацилеме вăй çитереймен.

Колхозсем хăйсен вăйĕпе çуракинче 2.650 гектар сухаланă, 3.737 гектар çинче кĕрхи сĕртмене тепĕр хут сухаланă е культиваци тунă, 3 100 гектар пĕрчĕллĕ тырăсем акнă.

Районти партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем МТС бригадисен ĕçне хытă асăрхаса тăнă, вĕсен ĕçĕнче кăштах кăлтăк пулсан та мерăсем йышăнма васканă. Анчах колхозсем хăйсен вăйĕпе мĕнле ĕçленине çавăн пек çирĕп контроль туса тăман пулман. Районти колхозсенче 800 плуг, 100 ытла сеялка, çиччи ытла сӳре шутланать, ĕç лашисем те ытлашшипех çитеççĕ. Çав ĕç хатĕрĕсемпе тата туртăм вăйĕпе ĕç нормине тултарса ĕçленĕ пулсан, колхозсем çураки срокне чылай кĕскетме пултарнă.

Хăшпĕр колхоз правленийĕсем, ямăт çул çине тăрса, пĕтĕмпех МТС çине шанма пăхаççĕ, колхозри ĕç вăйĕсемпе усă курассинчен пăрăнма тăрăшаççĕ. «Труд», «Союз», Высоковăри Сталин ячĕпе тăракан колхозсен лайăх сеялкăсемех пур, анчах вĕсене уя кăларса та курман. МТС бригадисем, планран ирттерсе ĕçлесе, ку колхозсене мĕнпур суртрисене акса панă, çав вăхăтрах тепĕр колхозсене акса памалли плансене пурнăçламасăр хăварнă. Çавнашкал практика сиенлĕ пулни каламасăрах паллă. Договора кашни колхозра тата кашни ĕç тăрăх тĕрĕссĕн пурнăçлани çеç колхоз председателĕсене хуçалăхри ĕç резервĕсемпе туллин усă курма хăнăхтарать.

Пĕтĕм республикăри пекех, Чурачăк районĕнче те уй-хир ĕçĕсене механизацилесси кăçал чылай ӳсет. Анчах ку вăл колхозсенчи ĕç резервĕсемпе усă курассине чакарассине пĕлтермест-ха. Районти колхозсен кăçалхи çуракинче те хăйсен вăйĕпе пысăк ĕçсем тумалла пулать.

Колхозсенчи плугсемпе, культиваторсемпе, сеялкăсемпе пĕтĕмпех тата тухăçлă ĕçлемелле тăвасси çинчен халех тĕплĕн шутламалла. Унсăрăн ака-суха ĕçĕсем иртнĕ çулти пек вăраха тăсăлма, çавăн пирки суртрисен тухăçĕ каллех чакма пултарать.

Трактор бригадисен çулталăкри ĕçĕсен итогĕсемпе паллашсан, чи малтан çакă курăнать: вĕсем ирхипе кĕрхи сĕртме, культиваци тунă тата ыраш акнă чухне яланах тухăçлăн ĕçлеççĕ. Сăмахран, вĕсем сĕртме сухи планне срокра тата 117 процент, культиваци тумалли плана 121 процент тултарнă. Суртри акнă, комбайнпа вырнă е молотилкăпа авăн çапнă чухне вара механизаторсен ĕç тухăçлăхĕ сасартăк чакать. Мĕншĕн?

— Трактористсем хăйсен çулталăкри планне çăмăлрах ĕçсем туса тултарма тăрăшаççĕ, — тет районти ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Осипов юлташ.

Трактор бригадисен ĕçĕн итогĕсене анализ тусан, Осипов юлташăн сăмахне те хирĕçлеме тивĕт. Мĕнпур айăпа механизаторсем çине йăвантарни тĕрĕс мар пулĕччĕ. Тĕп сăлтавĕ вăл—трактористсемпе комбайнерсене, машинистсене тухăçлă ĕçлеме условисем çителĕксĕр пулнинче.

Шултра хуçалăхлă колхозра çеç ку чухнехи хăватлă техникăпа туллин усă курма май пуррине колхозниксем халĕ пурнăçри практикăра курса ĕненчĕç.

1950 çулта, çĕршыври шултра хуçалăхлă колхозсенчен пример илсе, Чурачăк районĕнчи пĕчĕк колхозсем те пĕрлешме тытăннă. Кун хыççăн районта, унчченхи 75 артель вырăнне, 40 колхоз туса хунă. Колхозсене пĕрлештерес тĕлĕшпе парти райкомĕпе райисполком пирвайхи тапхăрта организациллĕ-массăллă пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Анчах вĕсем çав пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе халиччен те вĕçне çитерме пултарайман.

Паллă чăрмавсем çук çинчех районта 18 пĕчĕк колхоз пĕрлешмесĕр юлнă, вĕсенчен чылайăшĕн акмалли çĕр лаптăкĕ 300 гектартан иртмест, Çавăн пек пĕчĕк те вăйсăр колхозсенче ĕнтĕ тракторсемпе, комбайнсемпе, сложнăй молотилкăпа, сортировкăсемпе тата ытти кăткăс машинăсемпе туллин усă кураймаççĕ.

Договора пурнăçласа, МТС бригади «1-ое Мая» колхозра 30 гектар çинче кĕрхи сĕртме, çуркунне культиваци тунă, унтан çавăн çине 3—4 йышши культура акса панă. Кун пысăкăш лаптăк çинче сухаланă е культиваци тунă чухне тракторист чарăнмасăр, канлĕн ĕçлет. Анчах 3—4 йышши культура акма тытăнсан, трактора темиçе хутчен чарса, сеялкăна пĕр культура хыççăн теприне акма хатĕрлесе е вăрлăх пырса парасса кĕтсе кун иртет. Кун пек условире тракторист тухăçлă ĕçлессине кам кĕтме пултартăр-ха?

«Красный самолет» колхоза 40 гектарлă, «Дружба» колхоза 30 гектарлă участоксем çинче 3—4 йышши культура акса памалла пулнă. Акмалли задание тултармалла тесе, пĕр пĕчĕк колхозран тепĕрне куçса çӳресе, тăвăр участоксем çинче усăсăр çаврăнса тракторсене пушăлла çӳретни, çавăн пирки ĕç тухăçлăхне чакарни çинчен механизаторсем хытă кӳренсе калаççĕ.

Пĕчĕк колхозсенче агрономи наукин çĕнĕ меслечĕсемпе усă курма та май çук. Киров ячĕпе тăракан колхоз çĕрулмине хĕреслĕ-тăваткал меслетпе лартма МТС-па договор тунă. Анчах пĕчĕк колхозăн çĕрулми лартмалли участокĕ те пĕчĕкçĕ тата; çитменнине, вăл висĕ кĕтеслĕ пулнипе, ун çине трактор кĕртме те май килмен.

Тырпул пухса кĕртес ĕçĕн итогĕсем пĕчĕк колхозсенче МТС техникипе туллин усă курма май çуккине тата уççăнрах кăтартса параççĕ.

Чылай колхозсенче, районти ялхуçалăх пайĕнче те комбайнерсене тырă вырса, çапса памалли плана 79 процент çеç пурнăçланăшăн ӳпкелеççĕ. Чурачăк МТС-ĕ, чăн та, опытлă комбайнерсен кадрĕсемпе пуян мар-ха, вĕсен çĕршывра малта пыракан механизаторсенчен нумай вĕренмелле. Анчах ку районти комбайнерсем пĕчĕк колхозсен уй-хирĕсенчи пĕчĕк участоксем тăрăх куçса çӳресе мĕн чухлĕ вăхăта усăсăр ирттерни çинчен шутласа пăхакансем питех курăнмаççĕ.

МТС колхозсене авăн çапса памалли плана 100 процентпех, анчах пысăк йывăрлăхпа пурнăçланă. Пĕчĕк колхозсенче молотилкăсене таттисĕр ĕçлеттерме ниепле те май çук.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Организациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленипе

Çĕмĕрле районĕнчи Лесно-Колхознăй ял Совечĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлеме депутатсене тата ялти активистсене йышлă хутшăнтарнă. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсенчен, партипе совет органĕсен кăтартăвĕсенчен тухса тăракан практикăллă ĕçсем çинчен исполком ларăвĕсенче тата сессисенче час-час сӳтсе явнă. Сессисенче çуракине хатĕрленесси, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси, финанс планне тултарасси, кĕркуннепе хĕлле вăрман хатĕрлемелли задание пурнăçласси çинчен, шкул ĕçĕ çинчен тата ытти ыйтусене те пăхса тухнă. Исполком ларăвĕсенче те кулленхи журнăçра тухса тăракан ыйтусене, уйрăмах ĕççыннисене государствăна ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра парса татма тата укçа-тенкĕ парăмĕсене тӳлеме организацилесси çинчен нумай хутчен сӳтсе явнă.

Ял Совечĕ партипе правительство кăтартăвĕсем çинчен тата хăйĕн решенийĕсем çинчен ĕççыннисене ăнлантарса пама халăх пухăвĕсем час-час ирттерет. Кунсăр пуçне, ял Совет депутачĕсем тата активистсем ĕççыннисен задачисем çинчен колхоз бригадисен пухăвĕсенче каласа параççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем ялти граждансен сĕнĕвĕсене те пухаççĕ. Вĕсемех ял Советне практикăллă ĕçсене организацилеме тата ертсе пыма пулăшаççĕ.

Пĕр-пĕр ĕç çинчен сессире е исполком ларăвĕнче сӳтсе явма палăртсан, ял Совечĕ ку ĕç мĕнле пынине тĕрĕслеме яланхи комиссие тата ялти актива хутшăнтарать. Вĕсем ĕçе тĕплĕн тĕрĕслеççĕ, çитменлĕхсене палăртаççĕ, ĕçе лайăхлатмалли мероприятисен проектне хатĕрлеççĕ. Çав проектпа тĕрĕслев материалĕсене сессире е исполком ларăвĕнче пăхса тухаççĕ.

Организациллĕ-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленине пула ял Совечĕ хуçалăхпа культура строительствине ăнăçлă пурнăçласа пырать. 1952 çулта ку ял Совечĕ бюджета тупăшсем енĕпе 103,8 процент, расходсем енĕпе—103,7 процент тултарнă. Пĕлтĕр ял Совет территорийĕнче çичĕ çул вĕренмелли шкул лартнă, шкул валли икĕ хĕл хутмалăх вутă хатĕрленĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасем пурте вĕренме çӳреççĕ.

Культурăллă ĕçе ялти интеллигенци активлă хутшăнать. Иртнĕ çулта лекторсен ушкăнĕнче тăракансем пĕтĕмпе 80 докладпа лекци ирттернĕ. Ялти клубра час-час спектакльсемпе концертсем пулаççĕ, стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать, кĕнеке вулакансен конференцийĕсене ирттереççĕ.

Ку ял Совечĕ Мисчĕ ял Совечĕпе социализмла ăмăртса ĕçлет. Ял Совечĕсем пĕр-пĕрин ĕçне час-час тĕрĕслеççĕ, ĕçри опытпа паллаштараççĕ. Çаксем вара ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме, ял Совечĕн ертсе пырас ĕçри меслечĕсене лайăхлатма пулăшаççĕ.

Лесно-Колхознăй ял Советĕнчи «Красный Октябрь» колхозăн гидроэлектростанци пур. Ку колхозри обществăллă çуртсемпе колхозниксен килĕсенче электричество çути ялкăшать. Колхозра радиоузел пур, кашни килех радио кĕртнĕ. Ялти сыхăну агентстви урлă колхозниксемпе ялти интеллигенци 1953 çул валли 209 экземпляр тĕрлĕ хаçатсем тата 63 журнал илсе тăма çырăннă.

Çак колхоз 1952 çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе—110,3 процент, мăйракаллă шултра выльăхсем енĕпе—112,3 процент, сыснасем енĕпе—104,3 процент, чăх-чĕппе хур-кăвакал енĕпе—100 процент, кроликсем енĕпе—110 процент тултарнă. Колхоз государствăна ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татнă.

Ял Совечĕ ăнăçлă ĕçленине кура кăçалхи суйлавра унăн ĕлĕкхи составĕнчи депутатсенчен чылайăшне çĕнĕрен ял Советне суйларĕç. Организациллĕ сессире ял Совет председателĕ пулма халиччен те çав ĕçре ĕçленĕ М. Леонтьева юлташа, секретарь пулма иртнĕ составра та çав ĕçре ĕçленĕ С. Прокопьев юлташа суйласа хăварчĕç.

Депутатсем сессире халиччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма юраманни çинчен каларĕç, вĕсем ял Совечĕн ĕçри çитменлĕхĕсене çивĕччĕн критиклерĕç. Ял Совечĕ колхозсенче тырпул тухăçлăхне ӳстермелле тăвас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Фермăсенчи выльăхсен тухăçлăхĕ çителĕксĕр. Колхозсенче ĕç резервĕсемпе туллин усă курмаççĕ. «Красный Октябрь» колхозра локомобильпе тата хăма çурмалли рамăпа вăхăтран вăхăта çеç усă кураççĕ. Обществăллă хуçалăх валли хăма кирлĕ, колхозниксем те çĕнĕ çуртсем лартма тата киввисене юсама хăма çуртараççĕ. Хăма çурмалли рамăна яланах ĕçлеттерни колхоз хуçалăхĕшĕн те, колхозниксемшĕн те усăллă пулĕччĕ. Ял Совечĕ суйлавçăсем яла илемлетес, кĕперсемпе çулсем тăвас пирки панă наказсене пурнăçлас тĕлĕшпе оперативлă ĕçлемест.

Депутатсем сессире «Красная звезда» колхоза та электрификацилемелли, унта радиоузел тумалли, ветеринари пункчĕн çуртне лартмалли çинчен каларĕç тата ытти ĕçсем енĕпе те паха сĕнӳсем пачĕç.

Ял Совечĕн суйлавçăсен наказĕсене тата сесси йышăннă решенисене практикăра пурнăçлас ĕçе организацилес пулать. Ĕççыннисене пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планран тухса тăракан хуçалăхла-политикăлла ĕçсене пурнăçлама моблизацилесси—ял Совечĕн пысăк та ответлă задачи. Çак задачăна пурнăçлама ял Совет исполкомĕн мĕнпур депутатсене, яланхи комиссисене, ялти актива тата анлăрах хутшăнтармалла. Массăсен творчествăллă пуçарулăхне аталантарнипе, социализмла ăмăртăва вăйлатнипе ял Совечĕ хăйĕн умĕнче тăракан ĕçсене малашне те ăнăçлă пурнăçласа пырĕ.

К. ДМИТРИЕВ.

Атăл леш енчи торфопредприяти сывăх вăхăтрах, торф кăларма тытăнать.

Торф кăлармалли машинăсене юсас ĕçре В. А. Михайлов электросварщик лайăх тĕслĕх кăтартать. Вăл кулленхи задание 200-шер процент тултарса пырать.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. А. Михайлов электросварщик ĕçре.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Профсоюз работникĕсен семинарĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Районта профсоюз работникĕсемпе профсоюз активĕн пилĕк кунлăх семинарĕ пулса иртрĕ. Семинара Облпрофсовет ирттерчĕ.

Семинарта пулнисем «Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем», «И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем ятлă произведенийĕ», «Профсоюзсен организациллĕ-массăллă ĕçĕ», «Культурăллă-массăллă ĕç», «Ĕçлев законĕсем», «Социальнăй страховани» тата ытти темăсем тăрăх лекцисем итлерĕç.

Профсоюз работникĕсен пилĕк кунлăх семинарĕсем республикăри ытти районсенче те пулса иртеççĕ.

Шкул валли çĕнĕ çурт

ОКТЯБРЬСКИ. Урхас Кушкăри «Звезда» тата Этнескерти Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пĕлтĕр çичĕ çул вĕренмелли шкул валли çĕнĕ çурт тума йышăннăччĕ.

Çавăн хыççăн колхозниксем йывăç тата ытти материалсем чылай хатĕрлерĕç. Халĕ платниксем ĕçе тытăннă. Çурта çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне туса пĕтерме палăртнă.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

„Çĕр çинчи рай" спектакль ялсенче

ПЕРВОМАЙСКИ. Республикăри куçса çӳрекен колхоз театрĕн коллективĕ районти чылай колхозсенче Болгари драматургĕ, Димитровла премии лауреачĕ Орлин Василев çырнă «Çĕр çинчи рай» ятлă драмăна кăтартрĕ. Куракансем уйрăммăнах Т. Соловьев, В. Кудянов, М. Викулова артистсем лайăх выляннине, хăйсен ролĕсене ăнăçтерӳллĕ кăтартса пама тăрăшнине палăртрĕç.

А. ТУКМАКОВ.

Мотоциклпа çӳреме вĕренеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Нумай пулмасть районти Досааф организацийĕн оргкомитечĕ мотоциклпа çӳреме вĕренмелли курс уçрĕ. Мотоциклпа çӳреме Йĕпреç МТС-ĕнчи ăста механик А. Новиков вĕрентет. Курсра вĕренекенсене лайăх условисем туса панă, наглядннăй пособисем çителĕклĕ.

Г. РУСАНОВ.

Критикăпа библиографи

Паха произведени

Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай çырнă «Çул» («Перевал»)* ятлă сăвăллă роман нумай пулмасть Мускавра вырăсла пичетленсе тухрĕ. Ку произведени чăваш литературинче чăннипех паллă вырăн йышăнса тăрать. Романра автор ялхуçалăхне коллективизациленĕ вăхăтри ял пурнăçне тĕплĕн сăнласа кăтартать.

Ялхуçалăхне коллективизацилении питĕ паллă пĕлтерĕшĕ çинчен И. В. Сталин çапла çырнă: «Çакă вăл революциллĕ питĕ пысăк переворот пулнă, обществăн кивĕ качествăллă состоянинчен çĕнĕ качествăллă состояние сиксе куçни пулнă, çак сикĕм хăйĕн результачĕсемпе, 1917 çулти Октябрьти революциллĕ переворотпа пĕр пекех, пысăк вырăнта тăнă».

Ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçре вăтам хресчен çинче — хресченсен йышлă сийĕ çинче, ăна коммунизм енне туртăнтарас ĕç çине тĕрĕс пăхни коллективизаци ĕçне ăнăçлă пурнăçлама май панă. Çакна ĕççыннисен аслăран та аслă çулпуçĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин темиçе хут та кăтартса панă. 1929 çулта çырнă «Аслă улшăну çулталăкĕ» ятлă статьяра И. В. Сталин вăтам хресченсем колхоза кĕни çинчен питĕ уççăн каласа панă.

«Çул» поэма авторĕ Яков Гаврилович Ухсай — литература ĕçне çав аслă улшăну çулĕсенче тытăннă писательсенчен пĕри. Çав вăхăтра совет халăхĕ ялхуçалăхне коллективизацилес задачăна Коммунистсен партийĕ тата И. В. Сталин вĕрентнĕ пек татса панă. Совет халăхĕн пурнăçĕнчи çав питĕ паллă тапхăрти событисен пысăк пĕлтерĕшне поэт тĕрĕс ăнланнă. Çавăнпа ĕнтĕ колхоз строительстви çинчен калакан тема Я. Ухсай творчествинче чылай паллă вырăн йышăнса тăрать. «Çул» романра ялхуçалăхне коллективизациленĕ тапхăрти хресченсен пурнăçне кăтартнипе пĕрле, чăваш çĕршывĕнчи вăтам хресченсен çав вăхăтри шухăш-туйăмĕсене уççăн сăнласа кăтартнă.

Кĕнекен иккĕмĕш пайне автор «Вăл та колхоза пычĕ» тесе ят панă. Поэмăри тĕп геройсен—Калля пиччепе унăн арăмĕн Чинавье инкен кунçулĕ — миллионшар хресчен çемйисен пурнăçĕпе кунçулĕ. Калля — тӳрĕ кăмăллă ĕçчен çын. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне ансăр та хытă ăна çинче ĕçлесе, хăйĕн пурнăçне мĕн чухлĕ те пулин çăмăллатас тесе ĕмĕтленсе ирттернĕ. Анчах, темĕн чухлĕ тар юхтарса ĕçлесе те, вăл ĕлĕк кулаксен пусмăрĕнчен тата уйрăм хăрпăрлăх танатинчен çăлăнса тухма, хăйне валли телейлĕ пурнăç тума пултарайман.

Калля—вăтам хресченсен представителĕ. Колхоз стройĕн пĕлтерĕшне тĕплĕн ăнланса илменскер, вăл малтанах колхоза кĕме шикленсе тăрать. «Хамăр ӳснĕ çĕрсенчен питĕ йывăр каясси»,—тесе шухăшлать вăл хăй ăшĕнче. Уйрăм харпăрлăха хăнăхнă шухăш-туйăм ăна пĕрре те канăç памасть. «Шухăша путса каять пасара Калля пичче»:

Ĕмĕчĕ нумай малта,
Кирлĕ темĕн те илме,
Шухăшланă вăл тата
Кив пӳртне те сиплеме.

Çав вăхăтрах вăл арăмĕ валли пурçăн тутăр илме те ĕмĕтленет...

Пĕччен хуçалăхра пурăнакан хресчен хуçалăхĕнче темĕн тĕрлĕ инкек те тупăнать. Пĕррехинче акă,

Анкарти хыçне хире
Тухса кайнă-мĕн ĕне.

Тытнă пĕр тукмак хӳре,—
Пыршă юлнă хуçине.

Çак вак харпăрлăха ĕмĕртен хăнăхнă хресченĕн шухăш-туйăмне хирте кĕрлесе ĕçлекен трактор шавĕ çĕнĕрен хумхатса ярать.

Сăмсана кăтăкласа,
Сарăлать бензин шăрши,
Хартлатса, чĕвен тăрса,
Чăхăмлать çӳрен лаши.

Тĕрĕсрех пăхсан, автор çак эпизодра çĕнелсе пыракан ялта çĕнĕ те хăватлă вăй—колхоз стройĕ çĕнтерсе пынине тата хресченсен вак хуçалăх системи арканса пынине питĕ уççăн, ĕненмелле кăтартса панă.

Колхоза кĕнĕ хыççăн та Калля пурнăçĕ хăйне евĕрлĕ аталанса пырать. Вăл, пĕччен хуçалăхра асапланса пурăнма хăнăхнăскер, колхозри çĕнĕ йĕркесене хăвăрт хăнăхса çитеймест. Çитменнине тата Аливанов коммунист, ялхуçалăхне коллективизацилес тĕлĕшпе партипе правительство панă кăтартусене тĕрĕс ăнланман пирки, хресченсене колхоза тĕрлĕ майсемпе хăратса кĕртме тăрăшать, хресченсен хуçалăхĕнче мĕнпур вак-тĕвексене тата чăх-чĕпсене пĕтĕмпех обществăллă хуçалăха пĕрлештерме хăтланать. Çав вăхăтрах ялти кулаксем колхоз строительствине хирĕç хăйсен тăшманла агитацине вăйлăн сарса пыраççĕ. Çаксем вара Калляна чăннипех иккĕлентереççĕ. Романа вуланă чух, вăтам хресчен Калля сăнарĕпе пĕрле, чăваш ялĕнчи хресченсен колхоз строительстви пуçланиччĕнхи представителĕсен сăнарĕсем пĕрин хыççăн тепри куç умне тухса тăраççĕ. Вулакансем кунта Калля ывăлне—Якур комсомолеца тата Павăл коммуниста (малтан—тракторист, кайран — колхоз председателĕ пулать) кураççĕ, вĕсен тӳрĕ кăмăллă ĕçĕсемпе, ырă та пархатарлă ĕмĕчĕсемпе хавхаланаççĕ. Çаксемпе пĕрлех вĕсем Турикасри çĕрме кулак çине—Митти Харасĕ çине ылханса пăхаççĕ. Митти Харасĕ, ялтан пĕрре кăларса янăскер, яла тепĕр хут пырса кĕрсе, колхоз тăвассишĕн чунтан-чĕререн тăрăшса ĕçлекен активистсене хирĕç тăшманла хăрушă ĕçсем тăвать: Калля пӳртне вут чĕртсе çунтарать, ялти тӳрĕ кăмăллă хресченсен выльăхĕсене вăрласа пусать, Павăл çине тискеррĕн тапăнать. Ĕмĕртенпе çын юнне ĕçсе пурăннă Митти Харасĕ хăйĕн юлашки ылханлă кунĕсене пурăнса ирттерет; колхозри ăратлă ăйăра кĕтӳрен вăрлама хăтланнă вăхăтра ăна Калля тытса çапса вĕлерет.

Кĕнекере кахал та çапкаланчăк Митти образне те автор питĕ ĕненмелле туса кăтартнă. Митти çинчен çырнă сăвă йĕркисене вуланă чух авалхи кивĕ ялăн сăн-сăпачĕ анлăн тухса тăрать.

Тепĕр кахал та чăкăлташ çын—Петĕркке, хăй колхоза кĕрет пулин те, чылай вăхăт хушши хăйĕн вăйĕ çине шанмасăр пурăнать, вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăл колхоз пурлăхне те çаратма хатĕр.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ творчество ĕçĕнче пурнăçа тĕрĕс кăтартас тĕлĕшпе питĕ аслă та тĕрĕс кăтартусем парса хăварчĕ. «Пирĕн художниксен, литераторсен, искусство работникĕсен,—терĕ вăл хăйĕн докладĕнче,—хăйсен творчество ĕçĕнче илемлĕ сăнарсем парас тĕлĕшпе яланах çакна асра тытас пулать: питĕ час-час тĕл пулаканнине çеç мар типичнă тесе шутламалла, пĕр-пĕр социаллă вăйăн тупсăмне мĕн туллинрех те çивĕчрех палăртать, çавă типичнă пулать... Сăнара юриех ӳстерсе, çивĕчлетсе кăтартни типичнăçа пăрахăçламасть, ăна туллинрех уçса парать, тĕплĕнрех кăтартать». Çак енчен илсен, Миттипе Петĕркке хăйсем вăхăтĕнче, чăн та, типичнăй сăнарсем пулса тăнă, вĕсем хăйсене сӳратса ӳстернĕ социаллă сийĕн тупсăмне питĕ тĕрĕс кăтартса параççĕ.

Поэма колхоз стройĕ çĕнтернипе вĕçленет. Парти райкомĕн секретарĕ Николай Кузьмичпа Питĕртĕн килнĕ рабочи Лагин тата ялти коммунист Павăл халăха колхоз строительстви çинчен тĕплĕн ăнлантарнине пула, ялти чухăнсемпе вăтам хресченсем колхоза пĕрлешеççĕ. И. В. Сталинăн «Çитĕнӳсем пирки пуçсаврăнни» ятлă генилле произведенине тĕплĕн вуласа тухнă хыççăн, Калля та, ытти чухăнсемпе вăтам хресченсем пекех, колхоза кĕрет, артель хуçалăхĕнче чунтан-чĕререн тăрăшса ĕçлеме тытăнать. Унăн арăмне Чинавье инкене пысăк тухăçлă кантăр туса илнĕшĕн Совет правительстви Ленин орденĕпе наградăлать. Чинавье инке Тăван çĕршыв столицине—Мускава, Кремле пыни çинчен поэт çав тери хумханмалла çырса кăтартнă.

Акă, Чинавье инке, колхозра чунтан-чĕререн тăрăшса ĕçленĕскер, Мускава пырса çитет.

...Эх, утать урамсенче
Пур этемĕ те васкав!
Кĕр хĕвелĕ çуттинче
Кĕрлесе ларать Мускав.

...Тĕнчере Мускав пурри
Пур этемĕн чĕринче,
Ян каять мухтав юрри
Пĕтĕм аслă çĕр çинче.

Çак йĕркесене вуланă чух кашни вăтам çын, хăйĕн иртнĕ асаплă кун-çулне тепĕр хут аса илсе, паянхи телейĕ те савăнăçлă малашлăха уççăн курса тăрать, унăн чĕрине çĕнĕ вăй-хăват пырса кĕрет.

Калля çемйи, çĕршер пин ытти хресчен çемйисем пекех, хăйĕн телейне колхозра кăна шырса тупнă. Колхоз ăна çĕнĕ çурт лартса панă. Хăйĕн арăмĕ Чинавье инке Мускавран орден илсе килнĕ ятпа вăл «пустарнă пилĕк-улт кĕрхи автан».

Пурнăçра хăйне тĕрĕс çул çине тăма пулăшнăшăн, Калля пичче Павăл коммуниста чунтан-чĕререн тав тăвать:

— Савнă шăллăм, эсĕ маншăн
Чăннипех те коммунист,
Çавăнпа сана тăвасшăн
Килĕмре чи пысăк чыс.

«Çул» («Перевал») роман колхоз строительствин пуçламăш тапхăрне тата тӳрĕ кăмăллă колхоз хресченĕсен ĕçри хастарлăхне питĕ тĕрĕс кăтартса парать. Вырăсла куçарни те, чăвашла оригинал пекех, уççăн та ĕненмелле янăрать, чăваш халăхĕн чĕрери ăшă та хӳрӳ туйăмĕсене ĕненмелле палăртса хăварать.

Чăвашла тухнинче, чăн та, автор хăшпĕр тĕлсенче ытлашши тăсса кайнă е поэзи енчен тирпейсĕртерех çырса кайнă вырăнсем пур. Вырăсла куçарнинче вара авторпа куçаракансем çак шăйрăксене пĕтĕмпех шута илнĕ. Романăн Борис Иринин куçарнă сыпăкĕсем уйрăмах питĕ усăмлă, ăнланмалла, хитре янăраççĕ.

Я. Ухсайăн «Çул» романне вырăсла куçарса кăларни чăваш литературинче пысăк событи пулса тăрать. Ку вăл чăваш литератури идейăпа илемлĕх енĕпе ӳссе пынине тепĕр хут кăтартса парать. Чăваш литературин паллă произведенийĕсем вырăсла тухса пĕтĕм совет халăхĕсем вуламалли кĕнекесем пулса тăни савăнтарать.

Н. ЕВСТАФЬЕВ, М. ЮРЬЕВ.

*) Яков Ухсай—«Перевал». Чăвашларан П. Дружинин, Б. Иринин, В. Цвелев куçарнă. Мускав, илемлĕ литература издательстви. 1952 ç., тираж 10.000 экз., 272 стр., хакĕ 7 тенкĕ те 50 пус.

Çамрăк техниксен творчествăллă вечерĕ

Ишлейри вăтам шкулта çамрăк техниксен кружокне йĕркеленĕ. Унта аслăрах классенче вĕренекенсем тăраççĕ. Вĕсем кăçал физика кабинетне тĕрлĕрен сăнавсем тумалли приборсемпе пуянлатма сахал мар ĕçленĕ. Кружок членĕ В. Майоров юлташ пĕр лампăллă радиоприемник туса панă. Вăл питĕ аван ĕçлет. А. Щербаков электричествăпа çӳрекен трамвай моделĕ, Л. Моисеев реактивлă двигателĕн ĕçлекен модельне, Саперов юлташ аэродинамика трубинĕ тунă.

Кружок членĕсем уйăхра икĕ хут пулакан занятисенче радиотехникăна, электричество энергийĕ çинчен, коммунизмăн çĕнĕ стройкисенчи техника çинчен вĕренеççĕ, шкул ачисем хушшинче докладсемпе калаçусем ирттереççĕ.

Çамрăк техниксен çак кунсенче пулнă творчествăллă вечерĕ уйрăмах интереслĕ иртрĕ.

Шкул дирекцийĕ çамрăк техниксен пултарулăхне малалла аталантарса пырас шутпа пултаруллă кружковецсене хаклă кĕнекесем парса премиленĕ.

«Колхозник хаçачĕ».

«Родина», «Совет», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче, «МК-1100» молотилкăпа авăн çапас пулсан, пĕр смена хушши ĕçлемелĕх çеç çын уйăрса яма пултараççĕ. Молотилка пĕр смена ĕçлет те тепĕр талăкчен пушах ларать. Хăшпĕр колхозсенче «МК-1100» молотилка патĕнче пĕр смена хушши ĕçлеме те çын çитмест. Çавăн пирки ĕнтĕ «1-ое Мая» колхозра 85 тонна тырра МТС молотилкипе 20 кун хушши çапнă.

«Дружба» колхозра 18 хуçалăх шутланать, вĕсем те колхоз производствине пурте хутшăнмаççĕ. Колхозăн лашапа ĕçлемелли пĕр молотилка пур. 10—12 пĕчĕкрех кананри тырра мĕн кĕркуннеренпех çапаççĕ, анчах халĕ те çапса пĕтереймеççĕ, — молотилка патĕнче ĕçлеме çын çитмест.

Пĕчĕк артельсен хăйсен обществăллă хуçалăхне паянхи шайран çӳлерех çĕклеме анлă перспективăсем пулманни халĕ, пĕрлешнĕ колхозсем хăвăрттăн аталанса пынă вăхăтра, тата уççăнрах курăнать. Учтан та ытларах, пĕчĕк артельсен шучĕ пысăк пулни халĕ ялхуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе район умĕнче тăракан пысăк задачăсене пурнăçлама чăрмантаракан тĕп сăлтавсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Пĕчĕк артельсене, сăмахран, «Дружба», «Красный самолет», «1-ое Мая» колхозсене тата ыттисене те пĕрлештерес ыйтусене пĕрре çеç мар хускатнă, анчах ку ĕçе вĕçне çитерме парти райкомĕпе райисполком çине тăрса тăрăшман. Хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ çав ыйтăва çитес çывăх вăхăтра татса пами колхозсенчи производительлĕ вăйсене аталантарма нумай пулăшĕччĕ.

Пĕрлешнĕ колхозсенче ĕç резервĕсемпе туллин усă курмалли условисем пулса тăни вĕсене организацилле хуçалăх тĕлĕшĕнчен хăвăртрах тĕреклетсе пыма май пачĕ. Анчах Чурачăк районĕнчи колхозсен иртнĕ çулхи ĕçĕсен итогĕсем пĕрлешнĕ артельсенче те пысăк резервсене ĕçе кĕртейменнине кăтартса параççĕ.

Чылай колхозсенчи руководительсем тăтăшах çапла каланине илтме пулать: пĕрлешсе пысăкланнă колхоз хуçалăхĕнче çĕнĕ отраслĕсем хутшăнчĕç, уй-хир тата выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçсен шайĕ нумай ӳсрĕ, пур ĕçсене те вăхăтра туса пыма вăй çитерме хĕн. Сăлтавĕ—ĕç вăйĕсем çитменнинче мар, çав вăйсене обществăллă ĕçе тĕрĕс хутшăнтарма пĕлейменнинче тата тăрăшманнинче. Уйрăм колхозсене танлаштарса пăхăпăр.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра ĕç минимумне тултарма тивĕçлисем 227 çын шутланать. Вĕсемсĕр пуçне колхоз производствине ваттисемпе çамрăксем 30 çын ытла хутшăнаççĕ. Январьтен пуçласа декабре çитиччен колхоз производствине тӳрремĕн хутшăнакансен шучĕ 210-па 254 çын хушшинче çеç улшăнса тăрать. Урăхла каласан, ку артель членĕсем колхозри ĕçе çулталăк тăршшĕпех хутшăнаççĕ. Колхоз агротехникăллă ĕçсен планĕсене лайăх пурнăçланă, уй-хир ĕçĕсене пурне те срокра туса пынă, ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе малти вырăна тухнă, выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçе аталантармалли çирĕп никĕс тунă.

Ĕç вăйĕ шучĕпе Калинин ячĕпе тăракан колхозпа пĕр евĕрлине — Мичурин ячĕпе тăракан колхоза илĕпĕр. Кунта вара — урăхла картина. Тырпул пухса кĕртнĕ тапхăрта колхоз производствине 300—325 çын хутшăннă, унччен тата ун хыççăн ĕçленисен шучĕ 165 çынран иртмест. Январьпе февраль тата март уйăхĕсенче колхоз производствине хутшăннă çынсем те вăтам шутпа 10—12 ĕçкунĕнчен ытла тăмайман.

Колхозниксен массине обществăллă ĕçе мĕнле хутшăнтарнă — результачĕ те çапла. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз агротехникăллă ĕçсен планне нумай пурнăçлайман, тĕштырăсен тухăçĕ планпа палăртнинчен çурри ытларах çеç пулать. Хуçалăх отраслĕсене аталантарайман пирки укçа-тенкĕ тупăшĕ, планпа 231.500 тенкĕ вырăнне, 131,350 тенке çеç çитнĕ.

Районти 40 артельте колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕсене мĕнле хутшăннине кăтартакан пĕтĕмĕшле цифрăсене илсен те, çавăн пек лайăх мар картина тухса тăрать. Ĕçкунĕ тумалли минимума тултарма тивĕçлисем колхозсенче пурĕ 7,362 çын шутланать. Çав шутран 658-шĕ нимĕнле сăлтавсăрах минимума тултарман. Тырпул пухса кĕртнĕ тапхăрти виç-тăватă уйăх хушшинче çеç колхозниксене ялхуçалăх ĕçĕсене массăллăн хутшăнтарнă, ытти уйăхсенче вара ĕçе хутшăнакансен шучĕ темиçе хут сахалрах пулать. Сăмахран, август уйăхĕнчипе танлаштарсан, колхозниксем январь уйăхĕнче 4 хут, февральте 4 хут çурă, мартпа апрельте виçĕ хут сахалрах ĕçкунĕ тунă. Ĕç резервĕсемпе çавăн чухлĕ çеç усă курнă чухне кĕркуннепе хĕллехи агротехникăллă ĕçсен планĕсене тӳррĕн пурнăçлассине, хуçалăх отраслĕсене тĕреклетсе малалла хăвăрттăн аталантарассине кĕтме çук ĕнтĕ.

Вырăнти резервсемпе туллин усă курас ĕçре чи кирли вăл—кашни колхозник хăйне шанса панă техникăпа тата ĕç хатĕрĕсемпе тухăçлăн ĕçлемелле тăвасси. Иртнĕ çулти итогсем Чурачăк районĕнчи колхозсенче, уй-хир ĕçĕсен чи ответлă тапхăрĕсенче те, ĕç тухăçлăхне ӳстерессине çине ытла та сахал пăхнине кăтартса параççĕ. Районта тырă вырас ĕç июлĕн 27-мĕшĕнче пуçланса сентябрĕн 20-мĕшĕччен, урăхла каласан, 55 кун хушши пынă. Сĕмĕлсемпе суратсенчи кĕлтесене ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне çеç капан хывса пĕтернĕ. Çаксене пула колхозсем нумай тырра тăкса хăварнине халĕ пурте йышăнаççĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçсен срокĕсене кĕскетме вăйсем çителĕклĕ пулман теме çук. Июль, август, сентябрь уйăхĕсенче ялхуçалăх ĕçĕсене районĕпе вăтамран 9.800 çын ытла хутшăннă.

Тырă вырас ĕç вăраха тăсăлнин сăлтавĕ каллех ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕк пулнинче. Пĕр тĕслĕх. Колхозсемпе МТС-ăн пурĕ 74 жнейка шутланать. Çав машинăсемпе 55 кун хушшинче пурĕ 3.745 гектар, урăхла каласан, кашни жнейка пуçне пĕр кун хушшинче вăтам шутпа 0,90 гектар тырă çеç вырнă.

Жнейкăсемпе туллин усă курман пирки 9.133 гектар çинчи тырра алăпа вырса пухма тивнĕ. Паллах ĕнтĕ, жнейкăсемпе нормăна тултарса ĕçленĕ пулсан, районти колхозсем комбайнсемпе вырса çапнă хыççăн юлнă мĕнпур участоксем çинчи тырпула сахалтан та икĕ эрне маларах пухса пĕтерме пултарнă. Вăтамран шутласа пăхсассăн, алăпа выракансем те ĕç нормине çурри çеç тултарса пыни курăнать.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсем пĕр-пĕринпе тачăн çыхăнса тăни пуриншĕн те паллă. Пĕр ĕçне вăхăтра тăваймани теприсене пушшех кая тăратса хăварать. Районти колхозсенче тырпула вырса пухас ĕç икĕ уйăха пынă хыççăн, кĕлтесене капана кĕртесси хĕле кĕриччен тăсăлнă, авăнне вара хĕл каçиччен те çапса пĕтереймерĕç. Çакă вăл, хăй черечĕпе, суракине хатĕрленес ĕçре пысăк чăрмав кӳчĕ.

Çĕрĕç тата выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç культурине тататăкланах çĕклес задачăсем шутра хуçалăхлă колхозсенче производство процесĕсене ытларах та ытларах механизацилеме хушаççĕ. Чурачăк районĕнчи чылай колхозсем ку тĕлĕшпе те паллă çĕсем тăваймарĕç.

— Укçа-тенкĕ тупăшĕ сахал пулни касать,—пĕр сăмахпа ответлеççĕ чылай колхоз председателĕсем.

Пысăк тупăш паракан отраслĕсене аталантарасси çине хальхи пек хуçасăрла пăхсан, ку районти колхозсем хăйсен укçа-тенкĕ тупăшне хăвăрт ӳстереймĕç. Кунта эпир колхозсем техникăллă культурăсемпе пахча çимĕçсенчен илмесĕр хăварнă тупăш резервĕсем çинчен чарăнса тăрасшăн.

Районти пур колхозсем те йĕтĕн-кантăр продукцийĕ хатĕрлесе пама «Заготлен» кантурĕпе договорсем тунă. Государствăна контрактаци договорĕсенче кăтартнă чухлĕ кантăр сӳсĕпе вăрри парсан, колхозсем пĕтĕмпе 3 миллион та 700 пин тенкĕ укçа илмелле. Кунсăр пуçне вĕсем государствăран çĕршер тонна тырă, кантăр вăрри чусти, çу тата ытти продуктсем нумай илмелле. Анчах пурнăçра вуçех урăхла пулса пырать.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулшăн государствăна кантăр сӳсĕпе вăрри парса 44.500 тенкĕ, «Победа» колхоз 23.590 тенкĕ укçа илнĕ. Ытти 38 колхоз çав культурăран илнĕ тупăш пурĕ те 65.352 тенке çеç çитет, урăхла каласан, кашни колхоз пуçне вăтам шутпа 1.720 тенкĕ тивет.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Герасимов юлташ) 1952 çулта кантăр 12 гектар акнă. Государствăна сӳс парса ку колхоз пурĕ 89 тенкĕ укçа илнĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Тимофеев юлташ) 5 гектар çинчен татса пухнă кантăра пĕр хут çапнă та ялтан 4 километрти итем çине пăрахса хăварнă.

Районĕпе илсен, темиçе миллионлă тупăш паракан техникăллă культурăна пухса кĕртесси тата хатĕрлесе государствăна парасси çине хуçасăрла пăхакансем сахал мар-ха. Анчах районти партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем тухăçлă сӳс-кантăршăн кĕрешес ĕç çине сахал пăхнă, чылай колхозсенче çав хаклă культурăна уй-хиртех çухатса хăварнине çийĕнчех асăрхаман.

Хăмла колхозсен укçа-тенкĕ тупăшне ӳстермелли пысăк резервсенчен пĕри пулнине малта пыракан колхозсен опычĕ лайăх çирĕплетсе пачĕ. Чурачăк районĕнчи колхозсенче те чылай çул каярах çак культурăна ĕрчетме тытăннă, анчах ку ĕçе чăннипе хаклани курăнмасть-ха. Хăмла плантацийĕсем пĕтĕмпе 17,5 гектар шутланаççĕ. Агротехникăна пурнăçламан пирки хăмла тухăçне ӳстереймеççĕ. 1952 çулта районти 4 колхоз, государствăна хăмла парса, 19.814 тенкĕ тупăш илнĕ, ку вăл планпа палăртнинчен 10 хут ытла сахалтарах.

Çавăн пекех ку районти колхозсем сад-çырла тата пахча çимĕçрен ытла та сахал тупăш илеççĕ. Сăмахран, пахча çимĕç продукчĕсене государствăна парса тата рынокра сутса тунă тупăш пĕтĕм районĕпе те 72 пин тенке çеç çитет.

1953 çулта районти колхозсем умĕнче тата пысăкрах задачăсем тăраççĕ. Агротехникăллă ĕçсен планĕсене тӳррĕн пурнăçласа, мичуринла наукăн малта пыракан меслечĕсене ĕçе кĕртсе, тырпул тухăçне, 1952 çултипе танлаштарсан, икĕ хутран кая мар ӳстермелле. Техникăллă культурăсем акăнакан çĕр лаптăкĕ чылай хутшăнать. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕ тата тухăçлăхĕ нумай ӳсмелле.

Çак задачăсем колхозсене ертсе пырас ĕçе тĕпренех лайăхлатма, иртнĕ çулти ĕçсен итогĕсене тарăннăн анализ тума, производствăна лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне хăпартма, колхозсен тупăшне ӳстерме май паракан вырăнти резервсене ĕçе часрах кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешме хушаççĕ.

Н. ВОЛКОВ.

(Хамăр корр.).

ССР Союзĕнче тавар хакĕсене йӳнетни çинчен урăх çĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

КИТАЙ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ

ПЕКИН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Китайри хаçатсем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене йӳнетесси çинчен йышăннă постановление пичетлесе кăларнă. Çак постановление Китайри центральнăй, çавăн пекех Пекинри тата провинцисенчи радиостанцисем урлă темиçе хутчен те вуласа панă.

ЧЕХОСЛОВАКИ

ПРАГА, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Чехословакири хаçатсем Совет Союзĕнче апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли хакĕсене çĕнĕрен йӳнетни çинчен нумай çыраççĕ.

«Обрана люду» хаçат Совет Союзĕнче тавар хакĕсене йӳнетни çинчен умстатья пичетлесе кăларнă. «Руде право» тата «Лидова демокрацие» хаçатсем те çак ыйту тăрăх умстатьясем пичетленĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн Совет Союзĕнче тавар хакĕсене улттăмĕш хут йӳнетни, тесе çырать «Руде право» хаçат, социализмла строй, капитализмла стройран малта тăнине кăтартса парать.

Этемлĕх историйĕнче рабочи класăн мирлĕ те телейлĕ пурнăçĕшĕн çакăн пек тăрăшнă государство халиччĕн пулман, тенĕ статьяра.

Совет халăхĕ пĕтĕм тĕнчене çакна кăтартса пачĕ: унăн производстви мĕн чухлĕ ытларах ӳсет, çавăн чухлĕ производство расхочĕсем чакаççĕ тата ĕç тухăçлăхĕ ӳсет, çавăн чухлĕ унăн тавар хакĕсене йӳнетме тата ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатма пысăк майсем пулса тăраççĕ.

Эпир хамăрăн халăх демократи государствинче, Ленинпа Сталинăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ айне тăрса, Готвальд хушса хăварнисене пурнăçласа, малашне те Совет Союзĕпе пĕрле ĕçсыннисен тата та телейлĕрех пурнăçĕ патне пырăпăр.

ПОЛЬША

ВАРШАВА, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри хаçатсем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене улттăмĕш хут йӳнетесси çинчен йышăннă постановленин пысăк пĕлтерĕшне палăртаççĕ.

«Трибуна люду» хаçат çапла çырать: «Совет Союзĕнче, социализм çĕнтернĕ çĕршывра, социализмла производство халăх интересĕсене пăхăнса тăракан çĕршывра, социализмăн Сталин юлташ уçса панă экономикăлла тĕп законĕ çĕнтерӳллĕн вăй илсе тăрать. Çак закон пĕтĕм обществăн тăтăш ӳссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене пур майсемпе те ытларах тивĕçтерсе пыма хушать. Çак закон тăрăх, социализмла производствăна çӳлте тăракан техника никĕсĕ çинче вĕçĕмсĕр ӳстерсе тата лайăхлатса пынипе, Совет Правительстви апат-çимĕçпе промышленность таварĕсене çултан-çул йӳнетсе пырать».

Совет Союзĕнче таварсен хакне йӳнетесси çинчен йышăннă постановленин пĕлтерĕшĕ пысăк, тесе çырать хаçат малалла. Социализм çĕнтернĕ çĕршывра иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн тавар хакĕсене улттăмĕш хут йӳнетни вăл тĕнчери мĕнпур халăхсене тата тепĕр хут çакна кăтартса парать: пĕтĕм тĕнчипе мир туса хурассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекен Совет Союзĕ мирлĕ ĕçпе пурăнать, совет экономикине мирлĕ çулпа аталантарса пырассишĕн татăклă кĕрешет, халăхсен пурнăçне лайăхлатма тăрăшать.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсемпе кĕрешекен салтаксем тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

Генерал Кларк Ким Ир Сенпа Пын Дэ-хуэй патне янă çыру

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токиори корреспонденчĕ генерал Кларк Корея Халăх çарĕн командующийĕ маршал Ким Ир Сен тата Корейăри Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ Пын Дэ-хуэй патне янă çыру çинчен пĕлтерет. Унта çапла çырнă:

«Çакăнпа эпĕ Эсир, 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче Сирĕн пата янă манăн çыру çине ответлесе, 1953 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче ярса панă çырăва илни çинчен пĕлтеретĕп. Тыткăнри йывăр чирлĕ тата аманнă мĕнпур çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра улăштарса илме халех тытăнма эпир сĕннипе Эсир пĕтĕмпех килĕшетĕр пулĕ, тесе шанатăп.

Çавăнпа та эпĕ Сирĕншĕн майлă вăхăт килсе тухсанах Паньмыньчжоньра кашни енчен генерал е адмирал ертсе пыракан çыхăну ушкăнĕсен канашлăвне пухма сĕнетĕп, çак канашлăвăн тыткăна илнĕ çав çар çыннисене улăштарса илме кирлĕ тĕплĕ мероприятисем туса хатĕрлемелле.

Тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра улăштарса илсе пĕтерни тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва пĕр чăрмавсăр йĕркелесе яма май туса хурасси пирки Эсир шанса тăнипе эпĕ килĕшетĕп.

Çавăнпа та эпĕ хамăрăн çыхăну ушкăнне перемири тăвасси çинчен пирĕн тивĕçлĕ делегацисемпе калаçу пуçласа ярасси çинчен калаçса татăлма Сирĕн çыхăну ушкăнĕпе тĕл пуласси иккĕмĕш черетри задача пулать тесе кăтарту пама хатĕр тăратăп.

Çак ыйту тăрăх Эсир панă сĕнĕвĕн содержанийĕ тăрăх эпир çапла шутлатпăр: Эсир Пĕрлешнĕ нацисен командованийĕ панă сĕнĕве йышăнма хатĕр е хăвăр енчен çавăнпа пĕр тан конструктивлă сĕнӳ тăрататăр. Çакă вăл делегацисен канашлăвне пуçласа яма кирлĕ чăн-чăн никĕс пулса тăрать.

Тыткăнри йывăр чирлĕ тата аманнă мĕнпур çар çыннисене репатриацилес тĕлĕшпе мероприятисем туса хатĕрлеме икĕ енĕн çыхăну ушкăнĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулмалли вăхăт пирки эпĕ панă сĕнӳ пирки Сирĕнтен Хăвăрăн решени çинчен мана хăвăртрах пĕлтерме ыйтатăп».

Çыру çине çапла алă пуснă: Марк Кларк, Америка çарĕн генералĕ, Пĕрлешнĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ.

Ким Ир Сенпа Пын Дэ-хуэй Кларка панă ответ

ПЕКИН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Пхеньянран çапла пĕлтерет:

Апрелĕн 1-мĕшĕнче Корея Халăх çарĕн Верховнăй командующийĕ маршал Ким Ир Сен тата Китай халăх добровольцĕсен Командующийĕ генерал Пын Дэ-хуэй ООН-ăн Корейăри хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ генерал Кларк патне çакăн пек çыру янă:

«Эпир сирĕн 1953 çулхи мартăн 31-мĕшĕнчи çырăва илтĕмĕр.

Эпир сирĕн çырура кăларса тăратнă сĕнӳпе килĕшетпĕр, çак çырупа эпир сире çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: пирĕн енĕн çыхăну ушкăнĕ сирĕн енĕн ушкăнĕпе тыткăнри аманнă тата чирлĕ çар çыннисене улăштарса илесси çинчен тăракан ыйтăва малтанлăха сӳтсе явма, çавăн пекех перемири тăвасси çинчен калаçу пуçламалли кун пирки тăракан ыйтăва сӳтсе явса татса пама 1953 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче Паньмыньчжоньра канашлăва пухăнма хатĕр.

Çак çырупа пĕрле тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен панă сĕнӳ пирки Китай Халăх Республикин Правительствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви пĕлтернисен копийĕсене ярса паратпăр.

Корея Халăх çарĕн Верховнăй командующийĕ маршал КИМ ИР СЕН.

Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ генерал ПЫН ДЭ-ХУЭЙ.

1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ».

Италири пĕтĕмĕшле забастовка

РИМ, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 30-мĕшĕнче 8 сехетрен пуçласа 24 сехете çитиччен Италире пур çĕрте те забастовкăсем пулса иртнĕ. Ĕçсыннисем сенат демократие хирĕçле закон йышăннине протестленĕ. Пĕтĕм Италири ĕçлев конфедерацийĕн секретариачĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Унта каланă тăрăх, забастовкăна ĕçсыннисен пĕтĕм хисепĕнчен 90 процентран пуçласа 100 процент таран хутшăннă.

«Унита» хаçат кăтартса панă тăрăх, çĕршыври нумай хуласенче митингсемпе демонстрацисем пулса иртнĕ. Рим хулинчи рабочисен кварталĕсенче вуншар пин граждансем демонстрацие хутшăннă. Суту-илӳ тăвакансем нумайăшĕ демонстрантсемпе пĕр шухăшлă пулса хăйсен магазинĕсене хупса хунă.

Турин хулинче полици ĕçсыннисем çине тапăннă. Темиçе çынна, вăл шутра сенатор-социалист Кастаньона амантнă.

Миланра, Генуйăра, Венецире, Неапольре, Флоренцире, Барире тата Тарантора митингсемпе демонстрацисем пулса иртнĕ.

Хĕрарăмсен политикăллă прависем çинчен йышăннă конвенци

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 31-мĕшĕнче ООН çуртĕнче Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ хĕрарăмсен политикăллă прависем çинчен йышăннă конвенци çине савăнăçлăн алă пуснă. Конвенци çине çак 17 государство представителĕсем: СССР, УССР, БССР, Польша, Чехословаки, Франци, Мексика, Индонези, Ефиопи, Югослави, Аргентина, Чили, Куба, Гватемала, Эквадор, Доминикан республики тата Коста-Рика представителĕсем алă пуснă.

Ив Фаржа юлашки çула ăсатнă ятпа пулнă хурлăхлă митинг

Ĕнер ирхине Мускаври Центральнăй аэродромра Францири паллă обществăллă деятелĕн, Тĕнчери Сталинла премии лауреачĕн, вăхăтсăр вилнĕ Ив Фаржăн ӳтне Франциe ăсатнă ятпа хурлăхлă митинг пулнă.

Мир ĕçне сыхласа хăварассишĕн тата тĕреклетессишĕн паттăррăн кĕрешнĕ Ив Фаржа юлашки çула ăсатма Совет Союзĕнчи обществăллă организацисемпе ĕçсыннисен представителĕсем 500 çын ытла пухăннă.

Хурлăхлă митинга Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет комитечĕн председателĕ Н. С. Тихонов уçнă. Митингра тĕнчери Сталинла премисен комитечĕн председателĕ академик Д. В. Скобельцын, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн бюровĕн членĕ, Францири обществăллă деятель Лоран Казанова, совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕн председатель заместителĕ З. Н. Гагарина тата тĕнчери Сталинла премии лауреачĕ И. Г. Эренбург писатель тухса каланă.

Фадеев, Тихонов, Казанова юлташсем тата ыттисем те Ив Фарж ӳтне хунă тупăка самолет ăшне илсе кĕреççĕ. Хурлăхлă музыка кĕвви янăрать. Ив Фарж ӳтне хунă тупăка лартнă самолет çинче Фарж арăмĕ — Жермен Фарж тата Мускава килнĕ Франци профсоюз делегацийĕн членĕсем Дю Кастельпе Валентэн каяççĕ. Вĕсемпе пĕрле Варшавăна çитиччен Совет Союзĕнчи обществăллă организацисен представителĕсем: Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет комитечĕн ответлă секретарĕ М. И. Котов, Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Совет комитечĕн членĕ З. А. Лебедева тата тĕнчери Сталинла премисем тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн ответлă секретарĕ Г. Ф. Юдин кайнă. (ТАСС).

ИВ ФАРЖ ӲТНЕ ХУНĂ ТУПĂКА ПАРИЖА ИЛСЕ ÇИТЕРНĔ

ПАРИЖ, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Францири Мир Совечĕн председателĕн Ив Фаржăн ӳтне хунă тупăка ятарласа уйăрнă самолетпа Парижа илсе çитернĕ.

Апелляци сучĕн следстви палати йышăннă решени

ПАРИЖ, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Парижри апелляци сучĕн следстви палати паян каçхине Сена департаментĕнчи профсоюзсен пĕрлешĕвĕн секретарьне Андрэ Толлене тата эрнере пĕрре тухса тăракан «Авангард» журналăн главнăй редакторне Жан Меньене вăхăтлăха ирĕке кăлармалла тунă. Следстви палати вĕсене текех тĕрмере тытса усрама кирлĕ мар, тесе шутлать. Çав вăхăтрах следстви палати «Юманите» хаçатăн главнăй редакторне Андрэ Стиле, Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн генеральнăй секретарьне Ален Ле Леапа тата çак организацин ытти пилĕк руководителĕсене ирĕке кăларма килĕшмен.

ТУРЦИРЕ ТАВАР ХАКĔ ӲССЕХ ПЫРАТЬ

СОФИЯ, апрелĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Турцире тухса тăракан «Истанбул» хаçат «Эпир ăсталла пыратпăр» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Статьяра Турцире тавар хакĕсем пĕрмай ӳссе пыни çинчен каланă. Хальхи хаксене çур çул каялла пулнă хаксемпе танлаштарса, хаçат: кофе—45,7 процент, сыр—91 процент, çăмарта—128,5 процент, аш—50 процент хакланнă, тесе çырать.

Досаафăн Шупашкарти радиоклубĕнче радист ĕçне вĕренме кружоксем организациленĕ. Досааф членĕсем — Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен М. Барскова тата Г. Федорова кружокра питĕ лайăх вĕренсе пыраççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): М. Барсковăпа Г. Федорова радиограммăсем йышăнма вĕренеççĕ.

С. ВИКТОРИНОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Радист-операторсен республикăри конкурсĕ

Çак кунсенче радист-операторсен республикăри 7-мĕш конкурсĕ пулса иртрĕ. Конкурса республикăри хуласемпе районсенчи чи лайăх радист-операторсем хутшăнчĕç. Вĕсем Морзе азбуки тăрăх передача парас тата паракан передачăна йышăнас, 1953 çулшăн республика чемпионĕ ятне илессишĕн ăмăртрĕç. Ăмăрту командăсем хушшинче тата уйрăм радистсем хушшинче мала тухассишĕн пычĕ.

Конкурс иртерни радист-операторсен квалификацине ӳстерме пулăшать. Иртнĕ çулта Морзе азбуки тăрăх передача парас тĕлĕшпе республика чемпионĕ ятне Варюхин (Сĕнтĕр районĕ) илнĕ. Л. Колесников (Шупашкар хули) паракан передачăна йышăнас тĕлĕшпе республика чемпионĕ ятне илнĕччĕ.

Кăçалхи конкурс радист-операторсен ăсталăхĕ иртнĕ çулхинчен пысăкраххине кăтартса пачĕ.

Уйрăм радистсем хушшинче мала тухассишĕн пыракан ăмăртура Морзе азбуки тăрăх передача парас енĕпе кăçал Л. Колесников (Шупашкар) пĕррĕмĕш вырăна тухрĕ, 1953 çулшăн республика чемпионĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл пĕр минут хушшинче 194 знак панă. Ку вăл Пĕтĕм Союзри рекордран та пысăкрах пулать. Иккĕмĕш вырăна В. Казанкин (Шупашкар), виççĕмĕш вырăна Н. Сергеев (Шупашкар) тухнă.

Передачăна йышăнас енĕпе Г. Пауткин (Етĕрне хули) мала тухнă, республика чемпионĕ ятне илнĕ. Вăл 1.100 знакран 1.094 знакне тĕрĕс йышăннă. Иккĕмĕш вырăна М. Карасев (Шупашкар), виççĕмĕш вырăна Н. Сергеев (Шупашкар) тухнă.

Командăсем хушшинче мала тухассишĕн пыракан ăмăртура передачăна йышăнас енĕпе 5-мĕш номерлĕ команда (Шупашкар хулин) пĕррĕмĕш вырăн йышăннă, республика чемпионĕ ятне илнĕ. Командăра—В. Казанкин, Г. Васильев, В. Александров, А. Крыжовкин, А. Семенов юлташсем. Команда 3.000 знакран 2.986 знакне тĕрĕс йышăннă. Иккĕмĕш вырăна 3-мĕш номерлĕ команда (Шупашкар), виççĕмĕш вырăна 4-мĕш номерлĕ команда (Шупашкар) тухнă.

Ку командăсем передача парас енĕпе те пĕррĕмĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсене йышăннă.

Мала тухнă командăсене тата уйрăм радистсене парнесем тата дипломсем панă.

СПОРТ ЗАЛĔНЧЕ

— Заняти пуçлăпăр!—пĕлтерет физкультура преподавателĕ. Вăтăр-хĕрĕх хĕрача пĕр самантрах речĕпе тăрса тухаççĕ. Преподаватель вĕсене спорт упражненийĕсемпе паллаштарма тытăнать. Çамрăк физкультурницăсем преподаватель ăнлантарнине тимлĕ итлеççĕ, часах хăйсем те спорт упражненийĕсем тума тытăнаççĕ.

Шупашкарти суту-илӳпе кулинари шкулĕнче вĕренекенсен занятийĕ спорт залĕнче пулчĕ.

...Çак кунсенче Шупашкарта «Динамо» спорт обществин спорт залне уçрĕç. Сӳтă та аслă залра физкультурниксем çулталăк тăршшĕпех спорт енĕпе тренировкăсем тума пултараççĕ. Кунта волейбол, баскетбол, футбол, гимнастика тата ытти секцисем те ĕçлеме пуçланă. Секцисене «Динамо» спорт обществин работникĕсем тата Чăваш педагогика институтĕнчи физкультура преподавателĕсем ертсе пыраççĕ. Залра тăршшĕне тата çӳлĕшне сикес енĕпе те ăмăртма пулать. Ун пек чухне залăн урайне пĕр çĕртен уçса хураççĕ. Сикмелли вырăнсене хăйăр сарса тухнă. Çавна пула залра занятисене хĕллехи вăхăтра иртерме пулать.

Зала çĕнетсе йĕркелес тĕлĕшпе «Динамо» спорт обществин центральнăй Совечĕ пысăк пулăшу панă. Зала курма пыракансем валли балкон тунă. «Динамо» обществин залне «Искра», «Молния» спорт обществисен членĕсем, ялхуçалăх, педагогика институчĕсенчи тата ытти шкулсенчи физкультурниксем çӳреççĕ.

«Динамо» обществи Шупашкарти арçын ачасен 4-мĕш вăтам шкулне шефа илнĕ. Общество совечĕн инструкторĕсем шкулти физкультурниксене куллех пулăшса пыраççĕ, вĕсене тĕрлĕрен спорт секцийĕсен ĕçне хутшăнтараççĕ.

Акă Н. Крынецкий инструктор патне вăтам шкулта вĕренекен Н. Михайлов пычĕ. Вăл—сывлăхлă та тĕреклĕ çамрăк.

— Акă врач панă справка. Футболпа баскетбол секцийĕсен ĕçне хутшăнма кăмăл пур,—терĕ вăл.

Çамрăк физкультурниксем çине пăхатăн та чун савăнать. Вĕсем телейлĕ çитĕнеççĕ. Нумаях пулмасть спорт ĕçне хутшăннă çамрăксем темиçе çултан паллă спортсменсем пулĕç, вĕсем Тăван çĕршыв чысĕпе чапĕшĕн çĕнĕрен те çĕнĕ рекордсем тăвĕç.

Кĕскен

ВĂРНАР. Кунта Вăрнар, Йĕпреç тата Калинино районĕсенчи колхозсенчи ревизи комисси председателĕсен 10 кунлăх семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта пулнисем колхозсенче ревизипе контроль тата учет ĕçне мĕнле туса пымаллипе паллашрĕç.

М. АЛИВАНОВ.

ШĂХАСАН. Ямашри çыхăну уйрăмĕ сумĕнчи перекет касси кăçалхи пĕррĕмĕш кварталта ĕçсыннисем укçа-тенкĕ хывмалли плана 280 процент тултарнă.

Перекет касси агентствин кашни ялтах активлă вкладчиксем пур. Вĕсем укçатенке перекет кассинче усрасси çинчен ĕçсыннисем хушшинчи калаçусем иртереççĕ.

Х. ГОРДЕЕВ.

ÇĔРПӲ. Ялхуçалăх техникумĕнчен кăçал 49 агроном, 16 техник-механик вĕренсе тухмалла.

Агрономи уйрăмĕнче IV-мĕш курсра вĕренекенсем çак кунсенче Çĕрпӳ, Вăрнар, Вăрмар, Елчĕк, Чкаловски тата Шупашкар районĕсенчи колхозсене 80 кунлăха практикăна кайрĕç.

Г. ПАВЛОВ.

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Красноармейскинчи вăтам шкулта вĕренекенсем час-часах ушкăнпа кинокартинăсем кураççĕ. Юлашки вăхăтра вĕсем «На дне», «Детство», «Русский вопрос», «Горе от ума», «Дни и ночи», «Броненосец Потемкин», «Сталинградская битва» тата ытти кинофильмсем те курнă.

Г. ЛУКИН.

Атăл çинче

Шупашкар тĕлĕнче Атăл шывĕ апрелĕн 1-мĕшĕнче хушăнма пуçларĕ. Ĕнер ирхине, 8 сехет тĕлне пурĕ 16 сантиметр хушăннă.

Астрахань патĕнче Атăл пăрĕ кайнă. Кунта баржăсем çине нефть продукчĕсем тиеме тытăннă. Ăна малтанхи рейспа Атăл тăрăх тăвалла ярассĕ. «Волга» пăрçĕмрен пăр çĕмĕрсе Астраханьрен 100 километр тăвалла хăпарнă.

Козьмодемьянскинче сулă-гигант тăваççĕ. Унта çĕр пин кубометр ытла пĕрене пулать. Çав сулăна «Валерий Чкалов» пăрахут Атăл тăрăх илсе каять.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Агроном канашĕ

Вăрлăха сывлăшпа ăшăтса лайăхлатасси

Вăрлăхăн шăтас пахалăхĕ лайăх пулни тата вăл кар шăтса ӳсни пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Начар шăтса тухакан вăрлăхран, унăн нормине ӳстерсе аксан та, вăйлă тырпул ӳссе çитĕнессе кĕтмелли çук. Çавăнпа та ĕнтĕ çуракине хатĕрленнĕ чухне вăрлăха сыхласа усрасси тата унăн шăтас пахалăхне лайăхлатасси колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен ĕçĕнче чăннипех те тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

Вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен инспекцисем пĕлтернĕ тăрăх, уйрăм районсенче начар шăтакан вăрлăх нумай-ха. Акă, сăмахран, Пăрачкав районĕнчи колхозсенче тĕрĕсленĕ вăрлăхран 35 процентĕ, Кувакино, Çĕмĕрле тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче 18—20 проценчĕ начар шăтни палăрнă.

Хăшпĕр колхоз руководителĕсем пĕр тикĕс шăтман вăрлăх кирек мĕнле пулсан та акма юрăхсăр тесе шутлаççĕ, вăрлăх мĕншĕн начар шăтнин сăлтавне шута илмеççĕ. Çакăн пек шутлани вăл пур чухне те тĕрĕс мар.

Т. Д. Лысенко академик вăрлăхăн шăтас пахалăхĕ пĕчĕк пулни вăл цăсăлнинчисен кăна мар, урăх сăлтавсенчен килни те кăтартса панă. Тĕрĕс сыхласа усраманнине пула, кăлăпăр, шартлама сивĕ тивнипе е чир-чĕрпе сиен курса пăсăлнă пулсан, вăрлăх, паллах акма юрăхсăр пулаймасть, мĕншĕн тесен вăрлăх пĕрчисен зародышĕсем пĕтнĕ. Кун пек вăрлăха лайăх вăрлăхпа улăштарса илес пулать. Тепĕр чухне зародышĕсем сывă пулсан та вăрлăх шăтмасть. Ку вăл зародышсем хусканусăр пулнинчен, тепĕр майлă каласан, «çывăрнинчен» килет. Лысенко академик çавăн пек вăрлăха сывлăшпа ăшăтса акма юрăхлă тумалли меслете кăтартса панă.

Сывлăшпа ăшăтса усăлтарсан вăрлăхăн шăтас тата ӳсес вăйĕ пысăкланать. Пирĕн республикăра агротехникăллă çав çĕнĕ ĕçе юлашки çулсенче чылай тăрăшса пурнăçлама тытăнчĕç. Начар шăтать тесе шутланнă вăрлăхсене пĕлтĕр Чурачăк, Елчĕк, Тăвай районĕсенчи колхозсенче кăна 1.500 центнер ытла сывлăшпа ăшăтса лайăхлатнă. Ку меслетпе Вăрнар, Канаш, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче те анлăн усă курнă. Вăрмар районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозăн сывлăшпа ăшăтса лайăхлатиччен сĕлĕ вăрлăхĕ 89 процент шăтнă, ӳсес хăвачĕ 80 процент пулнă, хутнă çуртра ăшăтнă хыççăн унăн шăтаслăхĕ 99 процента, ӳсес хăвачĕ 97 процента çитнĕ.

Кăçал вăрлăхсене ăшăтса лайăхлатас ĕç çине уйрăмах тимлĕ пăхас пулать, мĕншĕн тесен вăрлăххăх хăварнă участоксенчи тырпула çанталăк начар чухне вырса çапма тиврĕ. Муркаш, Чурачăк, Калинино, Красноармейски районĕнчи нумай колхозсенче вăрлăха ăшăтса лайăхлатас ĕçе кĕркунех тытăннă. Вăрлăхăн шăтас пахалăхне ӳстерес тĕлĕшпе вĕсем чылай ĕçсем туса иртternĕ. Агротехникăн çак паха майĕпе пур çĕрте те усă курмалла.

Иртнĕ çулсенче пуринчен ытларах тулă, урпа, сĕлĕ тата пăрçа вăрлăхĕсене ăшăтнă, ытти культурăсем çине сахалтарах çаврăнса пăхнă. Сывлăшпа ăшăтни вика, кантăр, ясмăк, вир, пăри тата нумай çул ӳсекен курăк вăрлăхĕсемшĕн те усăллă.

Т. Д. Лысенко академик начар шăтакан вăрлăхсене çеç мар, ыттисене те сывлăшпа ăшăтма сĕнет. Акă, Йĕпреç районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра акма малтанах юрăхлă пулнă тулă, сĕлĕ, пăрçа, урпа вăрлăхĕсен пахалăхне палăрмаллах ӳстернĕ. Сăмахран, ăшăтиччен тулă вăрлăхĕн шăтаслăхĕ 92 процент пулнă, ăшăтсан 98 процента çитнĕ.

Вăрлăхсене ăшăтса аванлатас ĕç çăмăл, ăна кашни колхозрах пурнăçлама пултараççĕ. Ĕç ăнăçлă пултăр тесен, типовой сушилкăсемпе пуринпе те усă курас пулать. Сушилка çук пулсан вăрлăха хутакан çуртра та кушăхтарма юрать. Типĕтнĕ чухне ăшă режимне, вентиляцие тĕрĕс тытма пĕлни кирлĕ.

Сывлăшпа ăшăтнă хыççăн вăрлăха лабораторинче тепĕр хут тĕрĕслеттермелле, вăл кондицие ларнă пулсан, тек ăшăтма кирлĕ мар, унăн шăтас пахалăхĕ кирлĕ чухлĕ виçене çитмен пулсан, татах ăшăтса кушăрхаттармалла.

Халĕ ĕнтĕ хĕвеллĕ ăшă кунсем пуçланчĕç. Вăрлăха амбарсенче те ăшăтса лайăхлатма пулать. Кун пек чухне амбар алăкĕсене уçса тырпула 10—15 кун типĕтмелле. Вăрлăха 30 сантиметртан ытла мар сарса тухмалла, кунне темиçе хутчен пăтратмалла. Лайăхрах тата хăвăртрах кушăрхатăр тесе, вăрлăха веялка е сортировка витĕр кăларсан тата авантарах.

Амбарсенче вырăн çитмесен, вăрлăха брезентсем çине сарса уçă çĕрте типĕтме юрать. Унăн хулăнăшĕ 5—7 сантиметр пулмалла. Капла майпа вăрлăх хĕвеллĕ чухне пилĕк кунта акма хатĕр пулать. Вăхăта чакарма май пур. Тине кунсем тăнă вăхăтра кăнтăрлапа (ирхине тата каçхине мар) типĕтекен тырра веялка е сортировка витĕр кăлармалла. Унтан ăна хĕвел питтине 20—25 сантиметр хулăнăш сарса тухаççĕ. Кунне пĕр-икĕ хут пăлхатаççĕ.

Иртнĕ вăхăтри опыта шута илсе, çакна каламалла: акиччен вăрлăха мĕн чухлĕ маларах ăшăтатăн, çавăн чухлĕ лайăхрах.

Хăшпĕр колхоз руководителĕсем «çывăракан» тырă пĕрчисем çуркунне çитнĕ май хăйсемех, эпир пулăшмасăрах, шăтакан пулаççĕ, тесе каланине илтетĕн. Кун пек шутлани вăл йăнăш. Амбарсене хулăм сийпе хывнă вăрлăх хĕл вăхăтĕнче хытă сивĕнет, кунара вăл час ăшăнса çитеймест, çавăнпа унăн шăтаслăхĕ те акма тытăннă тĕле лайăхланма ĕлкĕреймест.

Колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен тивĕçĕ—çуракинче акма паха вăрлăх хатĕрлесе çитересси. Ку ĕçре вăрлăха сывлăшпа ăшăтса лайăхлатасси паллă вырăн йышăнмалла.

А. ФЕДОТОВ, агроном.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 4-мĕшĕнче каçхине вырăсла спектакль «Молодой человек». Апрелĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль «Дама невидимка». Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхи спектакль 20 сехетре пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК» — апрелĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче «Небесный тихоход», каçхи сеанссенче — «Путешествие будет опасным».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01350 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.